Чувашская
Республиканская
библиотека
им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июнь
21
ВЫРСАРНИКУН
№ 120 (9029)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
УЙРИ ТЫРПУЛА ЛАЙĂХ ПАХСА ЎСТЕРЕР! (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: М. Исаев.—Актив пухăвĕ. Н. Колесов.—Цехри парторганизаци ĕçе лайăхлатать (2 стр.).
Я. Русскин.—Тырпул тухăçлăхне ўстермелли майсем (2 стр.).
ФЕЛЬЕТОН: Н. Пушкин. — Туссемпе юссем (2 стр.)
ШКУЛСЕНЕ ÇĔНĔ ВĔРЕНŸ ÇУЛНЕ ЛАЙĂХ ХАТĔРЛĔР: А. Токарев.—Çутĕç органĕсен ответлă ĕçĕ. Е. Ефимов.—Çĕнĕ çитĕнўсемшĕн. Ф. Малышкин.—Çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Я. Мозяков.—Вĕренекенсене лайăх кĕтсе илме тăрăшатпăр. И. Нилов.—Вĕрентўпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн (3 стр.).
М. Марков.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Францири правительство кризисĕ (4 стр.).
Францири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ. Мориз Торез тухса калани (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

ТРАКТОР БРИГАДИ МТС-ри ПОЛИТИКĂЛЛА ĔÇĔН ЦЕНТРĔ ПУЛМАЛЛА

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен чи ответлă тапхăрĕ —тырă вырма тухмалли вăхăт çывхарса килет. Уй-хирти тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртни Тăван çĕршывăн вăй-хăватне малалла тĕреклетес, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç туни пулать.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе йĕркелĕ ирттерме мĕн кирли пирĕн пурте çителĕклĕ. Колхозсемпе МТС-сем çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнăçĕ. Тракторсен, комбайнсен, автомашинăсен тата ялхуçалăхĕнчи ытти паха машинăсен шучĕ нумайланчĕ. Тырпула хăвăрт тата тăккаламасăр пухса кĕртме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тата чыслăн пурнăçлама МТС-семпе колхозсен мĕнпур техникипе тухăçлă ĕçлемелле, ĕç вăйĕпе, туртăм вăйĕпе тулли усă курмалла. Парти организацийĕсен, ялхуçалăхĕнчи ĕçсыннисен социализмла ăмăртăвне куллен тата конкретлă ертсе пырса, йышăннă обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлама колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе комбайнерсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, колхозлă ытти мĕнпур ĕçченсене хавхалантарса пымалла.

Машина-трактор станцийĕсенчи парторганизацисем умĕнче уйрăмах пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен машина-трактор паркне лайăх хатĕрлесе çитерме, уй-хирти мĕнпур ĕçсене вăхăтра туса ирттерме, государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех сроксăр пурнăçлама механизаторсене мобилизацилемелле. Тырăшăн кĕрешес ĕçре трактористсемпе комбайнерсене Тăван çĕршыв пысăк ĕç шанса панине кашни механизатор туйса тăтăр. Тракторпа, комбайнпа, молотилкăпа тата ытти машинăпа ĕçлекен кашни механизатор хăйĕн сменинчи нормăна ирттерсе тултарма пултартăр, хăйĕн машинине лайăх пăхса усратăр, ĕçре тирпейлĕхшĕн, перекетлĕхшĕн, тухăçлăхшăн пĕтĕм вăя хурса кĕрештĕр.

Хуçалăхри ĕç йĕркеллĕ пулассишĕн, пирĕн çитĕнўсем çирĕп пулассишĕн партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсене лайăх тата витĕмлĕ туса пынинчен килет. Халĕхи вăхăтра, уй-хирти ĕçсем нумайланса пынă чухне, партилле-политикăлла тата массăлла пĕтĕм ĕçе уйра, колхозниксемпе механизаторсем ĕçленĕ çĕрте туса пымалла. Уй-хир бригади, трактор бригади политикăлла-массăлла ĕçсен центрĕ пулса тăмалла.

Республикăри чылай трактор бригадисем пысăк çитĕнўсем турĕç. Сăмахрăн, Вăрнар МТС-ĕнчи Социализмла Ĕç Геройĕ И. Проньăн юлташ ертсе пыракан бригада çурхи ĕçсен планне висĕ. хута ятăн ирттерсе тултарнă. Çак çитĕнĕве хуçалăхла ĕçе политикăлла ĕçпе тачă çыхăнтарнипе кăна тума пултарнă.

Бригадăри партгруппа пысăк вăй пулса тăнă. Вăл механизаторсен социализмла ăмăртăвне организацилесе пуçарса пырать, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе саратъ, механизаторсене техникăна лайăхрах вĕренсе пĕлме пулăшать. Партгруппа кашни механизаторпа уйрăммăн ĕçлет, паха тĕслĕх кăтартакансен пуçарăвĕпе ыттисене паллаштарать, юлса пыракансене вĕсен çитменлĕхĕсене, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Бригадăра, партгруппа пуçарнипе, тăтăшах производствăлла канашлусем ирттереççĕ. Çав канашлусенче сменăри тата талăкри ĕç нормисене тултарни çинчен, палăрнă çитменлĕхсем çинчен сўтсе яваççĕ, çитес кунхи ĕçсен планне пăхса тухаççĕ. Çураки вăхăтĕнче партгруппа кашни кун боевой листок кăларса тăнă, механизаторсем валли политикăлла докладсемпе калаçусем ирттернĕ.

Кун пек паха тĕслĕхсене ытти МТС-сен пурнăçĕнчен те кăтартса пама пулать. Çапах та, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн МТС-сенче политикăлла-массăлла ĕç кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр МТС-сем çураки планне тултараймарĕç. Политикăлла ĕçри тĕп çитменлĕх çакăнта пулать: чылай парторганизацисем партилле-политикăлла ĕçе кампанилле туса пыраççĕ, хуçалăхри задачăсемпе тачă çыхăнтармаççĕ. Политикăлла ĕçĕн анлăшĕ тата унăн содержанийĕ колхозниксемпе колхозницăсен тата механизаторсен ўссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь.

КПСС обкомĕн V-мĕш пленумĕ ялхуçалăх ĕçченĕсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕ. Политикăлла ĕç идея тĕлĕшĕнчен çўлĕ пусăмра тăмалла, ăна конкретлă туса пымалла. Ялхуçалăх ĕçченĕсем умĕнче халĕ çакăн пек ответлă задачăсем тăраççĕ: калчасене лайăх пăхса ўстермелле, тырпул пухса кĕртме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленмелле, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама мĕн кирлине пĕтĕмпех туса çитермелле, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемелле, выльăх-чĕрлĕх витисем тумалла, киввисене юсамалла. Политикăлла пĕтĕм ĕçе çак задачăсене пурнăçлас тĕллевпе туса пыни кирлĕ.

Трактор бригадисенче политикăлла ĕçе лайăхлатас тесен, парторганизацисен хăйсен вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси çине уйрăмах тимлĕн пăхас пулать. МТС-сенчи парти тата комсомол организацийĕсем йыш енчен чылай ўсрĕç. Халĕ ĕнтĕ нумай бригадăсенче парти групписем, комсомол групписем тума май пур. МТС-сенчи партбюросем тата директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен коммунистсене, комсомолецсене трактор бригадисем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухма тăрăшас пулать. Партбюросен, бригадăсенчи партгруппăсен коммунистсемпе комсомолецсен производствăри авангардлă рольне ўстерме куллен тăрăшмалла. Кашни коммунистпа комсомолеца партилле-политикăлла ĕçе хутшăнтарни кирлĕ. Вĕсем хăйсен ĕçри паха тĕслĕхĕпе тата хĕрўллĕ сăмахсемпе механизаторсене хастарлă ĕçлеме, ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата типтерлĕ туса пыма мобилизацилеме тивĕç.

МТС-сенчи парторганизацисен трактор бригадисенче агитаторсем пулма суйласа илес ыйту çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Политикăлла тата агитацилле ĕçре паха опыт туяннă, çак ĕçĕн мелĕсене лайăх пĕлекен тата политикăлла пĕлўлĕх тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ хатĕрленнĕ юлташсене кăна агитаторсем пулма уйăрмалла. Агитатор пысăк ĕç тăвать. Унăн механизаторсене хумхантаракан пур ыйтусене тĕрĕс тата ĕненмелле ăнлантарса парас пулать.

МТС-сенчи парторганизацисен агитаторсене пулăшас тата вĕрентес ĕçе вăйлатмалла. Вĕсемпе тăтăшах семинарсем, пухусем, канашлусем ирттермелле. Кашни агитатора ĕçре кирлĕ пулакан хаçат-журнал, литература тата ытти материалсем çителĕклĕ тупса памалла. Агитаторсене агитацилле-массăлла ĕçĕн паха опычĕпе куллен паллаштарни те вĕсене пысăк усă парать. Агиторсен политикăлла-массăлла пĕтĕм ĕçе партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем тăрăх, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем кăсалхи мартăн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре каланă сăмахсем тата СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă решенисем тăрăх туса пымалла. Çак историлле документсенче Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин шалти тата тулашри политикине, хамăр çĕршывра коммунизм тумалли çул-йĕре тĕплĕн кăтартса панă. Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешесси—механизаторсен хисеплĕ ĕçĕ.

Трактор бригадисенче политикăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе парти райкомĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен кашни трактор бригадин, кашни механизаторăн ĕçĕпе тĕплĕн интересленмелле. Унсăрăн механизаторсен социализмла ăмăртăвне конкретлă ертсе пырасси çинчен, трактористсемпе комбайнерсен ĕç условийĕсене, çавăн пекех пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Парти комитечĕсен, хăйсен докладчикĕсемпе лекторĕсен вăйĕпе усă курса, механизаторсем хушшинче тăтăшах политикăлла докладсем, лекцисем, калаçусем ирттермелле. Ялсенчи культура учрежденийĕсен ĕçне те лайăхлатас пулать. Колхозниксем, механизаторсем ĕçрен пушă вăхăта культурăлла канса ирттерме пултарччăр.

Политикăлла тата агитацилле ĕçре социализмла ăмăрту итогĕсем çинчен пурне те вăхăтра пĕлтерни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе наглядлăй агитацин пур майĕсемпе те, çавăн пекех стена хаçачĕсемпе, боевой листоксемпе, «çиçĕм» хаçатсемпе анлăн усă курмалла. Хисеп хăмисемпе кăтарту хăмисене кирлĕ пек йĕркелесси çинчен те манмалла мар.

Трактор бригадисене политикăлла ĕçĕн центрĕ туса хурса, механизаторсен социализмла ăмăртăвне куллен вăйлатар. Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене вăхăтра тата лайăх туса пырар, ялхуçалăхне малалла вăйлăн аталантарас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлар!

Уйри тырпула лайăх пăхса ўстерер!

Утă çулма тухрĕç

ЕТĔРНЕ. Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче уй-хирте нумай çул ўсекен курăксене çулса пуçтарма тытăнчĕ. П. Иванов бригади 15 гектар çинчи люцернăна çулса пуçтарса капана хывса лартрĕ.

Колхоз кăçал люцерна курăкне 4 хутчен çулса илме шутлать.

Çитес кунсенчех çаран утти çулса пуçтарма хатĕрленеççĕ.

М. ЗАХАРОВ.

Культиваци тăваççĕ

КУКЕÇ. (Телефонпа). МТС механизаторĕсем июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне колхозсенче ирхи сĕртме сухи тумалли плана 106,5 процент тултарчĕç.

Халĕ механизаторсем иртерех сĕртме сухи тунă участоксенче культиваци тума тытăннă. Каганович ячĕпе, Ленин ячĕпе, Фрунзе ячĕпе тăракан колхозсенче тата ытти колхозсенче те 200 гектар ытла сĕртме сухине культиваци турĕç.

13-мĕш бригада Чкалов ячĕпе тăракан колхозра ХТЗ-7 тракторпа кăкарса ĕçлемелли культиваторпа пахча çимĕçсен ретсен хушшине 8,5 гектар çинче кăпкалатрĕ.

Районти пур колхозсем те пахча çимĕç участокĕсенче ретсем хушшине кăпкалатса çум çумлаççĕ. Куйбышев ячĕпе тăракан колхозра пахча çимĕç бригадине опытлă колхозник С. Андреев ертсе пырать. Ку бригада 5 гектар çинче ретсем хушшине кăпкалатнă, çум çумласа пĕтернĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхозра та пахча çимĕç пăхса ўстерессине лайăх туса ирттереççĕ. Кунта бригадăна П. Яковлев комсомолец ертсе пырать. Бригадăра 60 çын ĕçлет. Пахча çимĕçсенчен купăста ытларах лартса ўстереççĕ, вăл кашни çулах пысăк тухăçлă пулать. Ретсем хушшине тасатассине пĕррĕмĕш хут туса пĕтернĕ. Вырăнти тата минераллă удобренисемпе апат панă. Халĕ бригада сĕрулми тĕмĕсене купалама тытăннă.

П. КОЗЛОВ.

ТЕХНИКĂЛЛА КУЛЬТУРĂСЕМ ЛАЙĂХ ЎСЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. Районти малта пыракан колхозсем çулсеренех техникăлла культурăсем акса пысăк тухăç илеççĕ. «Сталинская гвардия» колхоз кăçал 29 гектар кантăр, 7 гектар йĕтĕн акса хăварнă. Акнă культурăсем аван шăтса тухрĕç, çўлĕшĕ 10—15 сантиметртан иртнĕ. Техникăлла культурăсем акмалли çĕре тислĕк тата минераллă удобренисем хывса лайăх çемçетнĕ.

Ф. ОЛАНГИН.

Етĕрнере ялхуçалăх механизаторĕсем вĕрентсе хатĕрлекен шкул ĕçлет. Унта республикăри МТС-сем валли комбайнерсемпе трактористсем вĕрентсе кăлараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: комбайнерсем практикăлла занятире. Сылтăмри—И. П. Самчилеев преподаватель.

Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕ.

Выльăх апачлĕх культурăсене лайăх пăхса ўстермелле

ЧУРАЧĂК. Районти колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе çурхи аки вăхăтĕнче чылай пысăк ĕçсем турĕç, тымарçимĕçсем, силос тумалли культурăсем акмалли плана ытлашшипех тултарчĕç. Халĕ ĕнтĕ колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен çак культурăсене лайăх пăхса çитĕнтерме колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе хутшăнтарас пулать.

Калас пулать, чылай колхозсенче выльăх апачĕ нумай туса илме тăрăшни палăрмасть. Тымарçимĕçсен речĕсем хушшине кăпкалатас ĕçе пачах та тытăнман-ха. Шăхаль ял Советне кĕрекен «Гигант» колхозра пĕлтĕр выльăх кăшманне çумкурăксенчен тасатман, ретсем хушшине кăпкалатман, пирки кашни гектартан 2,8-шер центнер кăна кăшман туса илнĕ. «Гигант» колхоз руководителĕсен çакăнтан кăçал тивĕçлĕ вывод тумалла пулнă. Анчах иртнĕ çулхи йăнăша колхозра кăçал та тăваççĕ-ха. Кăçал кунта выльăх кăшманĕ тата силос тумалли культурăсем 13,5 гектар акнă. Акнă та лăпланса ларнă. Çумкурăксене кăçал та çумламаççĕ, кăшман речĕсем хушшине кăпкалатмаççĕ, сайралатма шухăшламаççĕ.

Кунсăр пусне, удобренисем сапса апат пани те çук. Силос тума акнă хĕвелçаврăнăшне çумкурăксенчен тасатма кирлĕ мар, тесе шутлать колхоз председателĕ Н. Смирнов юлташ.—Çумкурăксем те силос тума аванах каяççĕ,—тет вăл. Çавăн пек шутлани пачах вырăнсăр. Çумкурăксем хĕвелçаврăнăш тухăçлăхне хытă чакараççĕ.

Кун пек тĕслĕхсем Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красный самолет», Салари Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче те курма пулать. Выльăх апачĕ тумалли культурăсене «Гигант», «Красный самолет», Ворошилов ячĕпе тăракан тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче мĕншĕн çулсерен начар пăхса çитĕнтереççĕха? Колхоз правленийĕсем çак тарана çитсе те выльăх апачĕ хатĕрлекен уйрăм бригадăсем организацилемен, кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, выльăх апачĕ тумалли культурăсене уй-хир бригадисене çирĕплетсе панă. Уй-хир бригадисем тĕшшырра тата техникăлла культурăсене лайăхрах пăхса çитĕнтерессишĕн тăрăшнипе выльăх кăшманĕпе хĕвелçаврăнăшне манса хăвараççĕ.

Выльăх апачĕ тумалли культурăсене Калинин ячĕпе тăракан, «Прогресс», «Путь Сталина» тата «Совет» колхозсенче лайăх пăхса çитĕнтерме тăрăшаççĕ. Иртнĕ çулта ку колхозсенче кашни гектартан 250—275-шер центнер ытларах выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Анчах та районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ выльăх апачĕ тумалли культурăсене пăхса çитĕнтерес ĕçри лайăх тĕслĕхсене ытти колхозсене сарассине организацилеме тăрăшмасть.

Выльăх апачĕ хатĕрлеме колхозсене МТС çителĕксĕр пулăшать, тымарçимĕçсен речĕсен хушшине тракторсемпе ĕçлекен культиваторсемпе кăпкалатма Мичурин ячĕпе тăракан, «Прогресс», «Герой» тата хăшпĕр колхозсенче кăна тытăннă.

Колхозсенче силос хывма ăпăх хатĕрленнине те палăртмалла. «Динамо», «Победа», Ленин ячĕпе тăракан, «Союз», «Слава», «Стахановец» тата ытти хăшпĕр колхозсенче силос шăтăкĕсене хатĕрлеме тытăнман. МТС-ăн трактор вăйĕпе ĕçлекен 8 силосорезка пур. Вĕсене халĕ те колхозсене илсе кайман.

Выльăх апачĕ тума акнă культурăсене пăхса ўстерес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

С. КУЗЬМИН.

Сад ăстисен канашлăвĕ

Çак кунсенче Çĕрпўре республикăри сад ăстисен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Кунта колхозсенчи сад ăстисем, ялхуçалăх специалисчĕсем нумайăн пулчĕç.

Канашлура Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕн заместителĕ Р. Осанов юлташ республикăра сад ĕçне аталантармалли задачăсем çинчен доклад турĕ.

Доклад хыççăн Етĕрне районĕнчи «Парижская коммуна» колхоз садовочĕ Матвеев, Çĕрпўри улма-çырла питомникĕн директорĕ Таврин, ВЛКСМ Чăваш обкомĕн представителĕ Максимов, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз агрономĕ Бондаренко юлташсем, пурĕ 13 çын тухса каларĕç.

Докладчик тата тухса калаксем республикăри колхозсенче сад ўстерес ĕçре Çĕрпўри улма-çырла питомникĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртрĕç.

Кунти питомнике организациленĕренпе 13 çул иртнĕ. Республикăри колхозсене тата республика тулашĕнчи хуласене, колхозсене милсе çĕр пин тĕрлĕрен улма-çырла йывăççисем сутнине шутласа кăларма та йывăр.

Питомник кашни çулах пысăкланса пырать. Иртнĕ çуркунне кăна 18 гектар çине тĕрлĕ çырла йывăççисем лартса хăварнă, халĕ вăл пурĕ 200 гектар ытла йышăнать. Çак шутра 50 гектара яхăн улма-çырла сачĕ.

Çавăн пекех питомник çултан çул çĕнĕ улма-çырла сорчĕсемпе пуянланса пырать. Совет селекционерĕсем шыраса тупнă çĕнĕ сортсене сăнаса пăхма уйрăм участок уйăрнă. Сăмахрăн, 3—4 çул каялла Горький хулинчи ботанически садран «Красавица загорья» ятлă çĕр çырли пĕр пин тĕп илсе килнĕ. Сăнаса пăхнă тăрăх, çак çĕр çырли пирĕн республикăри колхозсен çĕрĕ çинче лайăх хуняса ўсе çитĕнме пултарать. Çак сортăн пĕр çырли 30 грамм таран таять. Халĕ «Красавица загорья» сортлă çĕр çырлине республикăри нумай колхозсем лартаççĕ. Иртнĕ çуркунне кăна питомник çак çĕр çырлине 48 пин тĕп ытла сутнă. Уйрăмах Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозсем нумай пин тĕп туяннă.

Çак юлашки çулсенче колхозсене «Славянка», «Китайка», «Золотая ранняя», «Антоновка», «600 граммовая» çĕнĕ сортлă улмуççисем, «Краса севера», «Плодородные» сортлă чие çырли нумай сутнă. Шупашкар районĕнчи Ильич ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ кĕркунне кăна 15 гектар çине лартмалăх Çĕрпўри питомникрен 3.200 тĕп улмуççи илсе кайнă. Ку колхозăн сад лаптăкĕ 25 гектар ытла шутланать.

Канашлу хыççăн унта пулнисем Çĕрпўри улма-çырла питомникĕнче экскурсире пулчĕç.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Тăван çĕршывра

ВЫСТАВКĂРА

Мускавра РСФСР-ти вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ туса кăларакан япаласен выставки уçăлнă. Выставкăна Мускаври, Ленинградри, Хусанти, Дон çинчи Ростоври, Саратоври тата ытти хуласенчи предприятисем туса кăларакан продукцие илсе пынă.

Выставка залĕсенче музыка инструменчĕсем нумай. Кунта пианино тата тĕрлĕрен рояльсем пур. Çав инструментсене паллă музыкантсем лайăх хак панă. Выставкăра çавăн пекех гитарăсем, домрăсем пур, вĕсене преспа хытарнă йывăçран тунă. Ку инструментсен сасси питĕ лайăх.

«Русские самоцветы» ятлă залра Уралти, Çĕпĕрти тата Ленинградри мастерĕсем чул касса тунă хитре япаласене кăтартаççĕ. Çавăн пекех фарфортан, фаянсран тата майоликăран тунă савăт-сапа нумай. Димитроври фабрика выставкăна чей сервизĕсем тăратнă. Чей чашăкĕсемпе чейникĕсем çинче—кăвак медальонсем, вĕсене ылтăн тĕслĕ сăрпа сăрласа илемлетнĕ.

Шкула усă курмалли япаласемпе çырмалли хатĕрсем туса кăларакан предприятисем выставкăна нумай япаласем тăратнă.

Выставкăна тăратнă чи лайăх япаласене суйласа илеççĕ те вĕсене йышлăн туса кăларма пуçлаççĕ. (ТАСС).

ТЫРПУЛА ШĂВАРАÇÇĔ

КРАСНОЯРСК, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Хакас автономиллĕ облаçĕнчи, крайри Минусинск, Краснотуранск тата ытти районсенчи колхозсем уйри тырпула шăварса ўстереççĕ. Кăçал 20 пин гектар çинчи тырпула шăварнă. Пурĕ 34 пин гектар çинчи тырпула икĕ хутчен шăвараççĕ.

Вологда. Старши инженер-экономист М. В. Маркова коммунистка пуçарнипе Вологдăри паравус деповĕнче производствăпа хуçалăх ĕçĕсене лайăхлатас, хуçалăх расчетне пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Комплекслă производствăпа финанс планĕ тунă, май локомотив тата ремонт бригадисем производствăри кашни операци хакне пĕлеççĕ. Машинистсене кашни хут çул çине кайса килме производствăпа финанс планĕ туса пăраççĕ.

Çапла ĕçленине пула депо иртнĕ çулта, шалти резервсене мобилизациленине, планран ирттерсе 300 пин тенкĕ накоплени тунă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. В. Маркова малта пыракан машинистсемпе пĕрле ĕç итогĕсене сўтсе явать. Сулахайран сылтăмалла — машинистсем Н. А. Егоров, И. И. Кузнецов, М. В. Маркова тата Б. Д. Валяев.

Г. УДАЛЬЦОВ фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тырă тата пахча çимĕç турттармалли автосамосвалсем

МЫТИЩИ (Мускав облаçĕ), июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Тырă тата пахча çимĕçсем пухса кĕртмелли вăхăт çывхарса килет. Вĕсене турттарма çĕршер автомашинăсем кирлĕ. Кăçал тырăпа пахча çимĕçсем турттарма çĕнĕ автосамосвалсем пулаççĕ.

Кун пек автосамосвалсене Мытищири машинăсем тăвакан завод туса кăларма пусланă. Машинăн хупăлчи те пур. Вăл сумăр çунă чухне тырă е пахча çимĕç йĕпенесрен тата пылчăкпа варалансран сыхлать. Самосвал çине виçĕ тонна кĕрет. Пушатнă чухне хыçалти бортне уçмалла та, тырă е пахча çимĕç хăех пушанать. Малтан туса кăларнă 10 автосамосвала совхозсемпе колхозсене ярса панă.

ÇĔРШЫВРИ УЙХИРСЕНЧЕ

ЖИТОМИР. Пысăк лаптăксем çине акнă йĕтĕн чечеке ларнă. Облаçри колхозсем кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 6 пин гектар ытларах йĕтĕн акнă.

Колхозниксем йĕтĕн-долгунец акса ўстермелли агротехникăна лайăхлатса пыраççĕ. Йĕтĕн акса тăвакан звенойсене пысăклатнă, вĕсем халĕ ĕнтĕ 10—15 гектар çинче ĕçлеççĕ (иртнĕ вăхăтра 4—5 гектар çинче çеç ĕçленĕ пулнă). Ку вăл трактор сеялкисемпе лайăхрах усă курма, йĕтĕн татмалли машинăсемпе тата комбайнсемпе ытларах ĕçлеме май туса панă.

ЧАРДЖОУ. Чарджоу районĕнчи Жданов ячĕпе тата Киров ячĕпе тăракан колхозсен нумай участокĕсенче хлопчатникĕн мамăк пулмалли чăмăртанса пырать. Ўсентăрансем питĕ лайăх ўсеççĕ. Колхозсем, механизаторсемпе тусла ĕçлесе, кашни гектартан чĕрĕ çĕр мамăкĕ планпа пăхнинчен 8 центнер ытларах туса илме пулнă. Çак хуçалăхсенче ĕçе комплексла механизацилеççĕ. Халĕ, хлопчатнике лайăх пăхса ўстермелли вунсенче, Жданов ячĕпе тата Киров ячĕпе тăракан колхозсен уй-хирĕнче 25 пропашной трактор ĕçлет.

Июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС).

УРПА ВЫРАÇÇĔ

УЖГОРОД, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Закарпатски облаçре кĕрхи урпа вырма пуçланă. Береговски округри колхозсем урпа чылай вырнă. Севлюшски МТС механизаторĕсем те урпа вырма тухнă.

Кăçал комбайнсемпе, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах ĕç тăваççĕ. Колхозсенче ытти ĕçсем хисепĕ пит хут ўснĕ.

„Большевик" заводăн çитĕнĕвĕ

СĔМĔРЛЕ, июнĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). «Большевик» завод экстракт туса кăлармалли çур çулхи плана июнĕн 16-мĕшĕ тĕлне, продукци туса кăлармалли улттă уйăхри плана пĕтĕмпе июнĕн 19-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Пĕлтĕрхи çур çулхипе танлаштарсан, экстракт 12,2 процент ытларах туса кăларнă.

Июнĕн 19-мĕшĕнче рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху çак çулăн пуçламăшĕнче йышăннă социализмла обязательствăна пăхса тухрĕ, çĕнĕ, пысăкрах обязательство илчĕ, çулталăкри плана пур кăтартусем енĕпе те срокчен тата ирттерсе тултарма пулчĕ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Актив пухӑвӗ

КПСС Сӗнтӗр районӗнчи парти активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Актив пухӑвӗнче парти обкомӗн V-мӗш пленумӗн итогӗсем çинчен КПСС райкомӗн секретарӗ М. Парлов юлташ доклад турӗ.

Докладчик районти парторганизацире ертсе пыракан кадрсене суйласа илес, вырӑна хартас тата вӗсене воспитани парас ӗçри хӑшпӗр ӳсӗмсене палӑртрӗ. Пир-авӑр фабрикинче, промкомбинатра, «Колос», «Броневик» тата ытти уйрӑм колхозсенче кадрсемпе ӗçлесси чылай лайӑхланнӑ.

Анчах, районӗпе илсен, кадрсене суйласа илес тата вӗсене воспитани парас ӗçре пысӑк çитменлӗхсем пур. Çак кирлӗ ӗçе уйрӑмах суту-илӳ организацийӗсенче (райпотребсоюз председателӗ Д. Карпков юлташ), Сӗнтӗр вӑрманпромхозӗнче, кинофикаци пайӗнче хусалӑх организацийӗсенче тивӗçлипе хаклаймаççӗ. 1952—1953 çулсенче кинофикаци ӗçӗнчи 24 работникран пурте улшӑннӑ. Райпотребсоюз системинче кӗçҫе вӑхӑтрах 24 работника улӑштарнӑ. Кунти организацисенче критикӑпа самокритикӑна хӗссе пыраççӗ. Вӑрманпромхоз директорӗ А. Малинин юлташ кадрсен ӗçри ответлӑхне ӳстерессишӗн нимӗн чухлӗ те тӑрӑшмасть, хӑйӗн ӗçне кирлӗ пек туса пымасть.

Пренире тухса калакан юлташсем районти парторганизацире кадрсене ӗçе вырнаçтарас тата воспитани парас тӗлӗшпе пулнӑ пысӑк çитменлӗхсене палӑртрӗç, республикӑри хӑшпӗр организацисен ӗçӗнчи çитменлӗхсем çинчен те каларӗç. Райсовет исполкомӗн культурӑпа çутӗç пайӗн заведующийӗ П. Пожеданов тата ытти юлташсем КПСС райкомӗн ӗçне критиклерӗç. Райком тепӗр чухне работниксем çинчен тӗрӗс мар вывод тӑвать. Пӗр ӗçре пултарайман работниксене тепӗр ответлӑ ӗçе сӗнни те пулнӑ.

Тухса калакан юлташсем Чӑваш АССР Сывлӑх министерствинчи работниксен çитменлӗхӗсене палӑртрӗç. Сӗнтӗр больницинче темиçе уйӑх ӗнтӗ главнӑй врач çук. Ильинкӑри, Карлӑхри санаторисенче те врачсем çитмеççӗ. Анчах министерство района медицина работникӗсем уйӑрса ямасть.

Калчасене пӑхса ӳстерес, тырпул пухса кӗме тата государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем пама хатӗрленес ӗçре те пысӑк çитменлӗхсем пур. Калинин ячӗпе, Сталин ячӗпе, Каганович ячӗпе тӑракан, «Аврора», «Хлебороб» колхозсенче сум сумлас ӗçе пуçӑнман. Районти МТС тырпул пухса кӗртме начар хатӗрленет. Ялхуçалӑх машинисене юсамалли плана МТС 40,4 процент кӑна тултарнӑ.

Районти «Дуб» тата «Дружба» промысла артелӗсем колхозсене сахал пулӑшаççӗ, ялхуçалӑхӗнче кирлӗ хатӗрсем сахал туса кӑлараççӗ.

Иртнӗ çулта «Гигант», Лысенко ячӗпе тӑракан тата ытти нумай колхозсем авӑн çапас ӗçе питӗ вӑраха ячӗç. Çак колхозсен руководителӗсем ку ӗçе кӑçал та хакламаççӗ, кирек мӗнле çанталӑкра та авӑн çапмалла тӑвас тесе тӑрӑшмаççӗ. Нумай колхозсенче витнӗ итемсене юсамаççӗ.

Уйрӑмах обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре çитменлӗхсем нумай. «Коммунизм», «Ленинский путь», «Новая жизнь», Киров ячӗпе тӑракан колхозсенче выльӑх витисем çитмеççӗ. Анчах та кунта паян кун та витесем тӑвас ӗçе пуçарман. «Слава», «Ударник», «Передовик», «Большевик», Мичурин ячӗпе тӑракан колхозсенче те строительство ӗçӗ начар пулса пырать.

Парти активӗн ӗçри çитменлӗхсене пӗтерме решени йышӑнчӗ.

М. ИСАЕВ.

Цехри парторганизаци ӗçе лайӑхлатать

Улатӑрти пӑрахусем юсакан заводри котельнӑй цех иртнӗ çулта начар ӗçлерӗ. Цех час-часах юрӑхсӑр продукци кӑларни заводӗ ӗçне те чӑрмав кӳретчӗ, ытти цехсене ӗç тухӑçлӑхне ӳстерме кансӗрлетчӗ. Котельнӑй цех кӑçал та малтанхи икӗ уйӑхра çителӗксӗр ӗçлесе пычӗ.

Мӗнщӗн-ха цех коллективӗ производство планне тивӗçлипе тултарса пыраймарӗ? Тен, кунта вӑй çителӗксӗр? Кун пек шутлани пачах та тӗрӗс мар. Ӗçе йӗркеллӗ туса пыма котельнӑй цехра условисем çителӗклӗ, ӗçлекенсен коллективне те хурлама çук. Цехра парторганизаци пур. Вӑл 10 коммуниста пӗрлештерсе тӑрать.

Çак мӗнпур пысӑк вӑй лайӑх организациленӗ пулсан, цех коллективӗ пысӑк ӳсӗмсем тума пултарнӑ. Анчах кунта шатти мӗнпур вӑйсене организацилесе, мобилизацилесе пыракан пулман. Цехри парторганизаци хӑйӗн рольне пачах палӑртман ун чухне.

Заводри партбюро цехри парторганизацие ӗçе лайӑхлатас тӗлӗшпе конкретлӑ пулӑшу пачӗ. Çакӑн хыççӑн кӑна парторганизаци хӑйӗн пӗлтерӗшне ӳстерсе пынӑ [illegible] пухӑвӗ.

Кӑçалхи март уйӑхӗнче цехри парторганизацин уçӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта, коммунистсемсӗр пуçне, комсомолецсем, партире тӑман ытти рабочисем те пулчӗç. Партин уçӑ пухӑвӗ «Продукци пахалӑхне лайӑхлатасси çинчен» сӳтсе явнӑ.

Парторганизацири коммунистсем цехра продукци пахалӑхӗ мӗншӗн çителӗксӗр пулнине, пуху пулас умӗн тӗплӗн тӗрӗслени чӗ. Савӑнпа та пуху активлӑ иртрӗ. Коммунистсем кунта цех администрацине те, парторганизаци секретарьне те хӑюллӑн критиклерӗç. Партире тӑман рабочисем те çитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе чылай сӗнӳ сӗнӳсем пачӗç.

Парторганизацине цех руководстви тӗп çитменлӗхӗ çавӑнта пулни палӑрчӗ: рабочисен тата инженерсемпе техниксен ӑмӑртӑвне — кирлӗ пек йӗркелемен, малта пыракан рабочисен опытне сарас тӗлӗшпе çине тӑрса тӑрӑшман, ӗç дисциплини начар пулнӑ.

Парти пухӑвӗн решенийӗсене пурнӑçланӑ май, цехри мӗнпур ӗçсем часах улшӑнчӗç. Социализмла ӑмӑрту вӑйланнӑ çемӗн вӑйланса пычӗ. Бригадӑсем хушшинчи социализмла ӑмӑртура П. Сергиевский юлташ ертсе пыракан бригада уйӑхри задание 189 процент тултарса пӗрремӗш вырӑна тухрӗ. Бригадӑри рабочисем мӗнпур продукцие лайӑх пахалӑхпа тунӑ. Бригада коллективне хисеплӗ ят — лайӑх ӗçлекен бригада ятне, Сергиевский юлташа хӑйне заводри лайӑх слесарь ятне панӑ. Çавӑн пекех Н. Мироновпа Н. Ермилов юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем те лайӑх ӗçлекен бригадӑсен ятне илчӗç.

Çапла вара малтан кая юлса пынӑ цехри ӗçсенче кӗçӗр вӑхӑтрах улшӑнусем пулчӗç. Цехра брак тӑвасси пӗтсе çитнӗ тесе çук-ха. Анчах та халӗ малтанхинчен чылай урӑхла йӗрке тунӑ. Кам та пулин брак тусан — ун çинчен сӳтсе явмасӑр хӑвармаççӗ, брак тунин сӑлтавне тӗпчесе пӗлсе унпа çыхӑннӑ производствӑлла канашлусенче е профсоюз членӗсен пухӑвӗсенче ятарласа ыйту хартаççӗ.

Пӗррехинче котельщик Парфенов юлташ хӑйӗн ӗçне çиелтен тунине палӑрчӗ. Çак ыйтӑва производствӑлла канашлура сӳтсе ячӗç. Парфенов юлташа канашлура чылай юлташсем критиклерӗç. Юлашкинчен вара вӑл тӑрӑшарах ӗçлеме сӑмах пачӗ, «урӑх нихӑçан та брак тумӑп», терӗ. Котельщик хӑйӗн сӑмахне тӳрре кӑларчӗ, халӗ вӑл лайӑх пахалӑхпа кӑна ӗçлет.

Пуçламӑш парторганизаци коммунистсен ӗçне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑрать, вӗсене ытти рабочисем умӗнче лайӑх тӗслӗх кӑтартса ӗçлеме воспитани парать, çитменлӗхсене хирӗç хастарлӑрах кӗрешет. Ку тӗлӗшпе нумай тӗслӗхсем кӑтартса пама пулать. Продукци пахалӑхне лайӑхлатасси — парторганизаци ӗçӗнче тӗп вырӑнта тӑрать. Ӗç тухӑçлӑхӗпе пахалӑхне ӳстерессишӗн пыракан социализмла ӑмӑртура тивӗçлипе коммунистсем малта пыраççӗ.

Коммунистсен примерӗпе хавхаланса, комсомолецсемпе çамрӑксем те лайӑхрах ӗçлекен пулчӗç. Сӑмахран, Бычонков комсомолец ертсе пыракан çамрӑксен бригади Рощин юлташ ертсе пыракан бригадӑпа ӑмӑртса ӗçлет. Бригадӑсем пӗр пек ӗç тӑваççӗ. Вӗсен вӑйӗсем те пӗр пек. Социализмла ӑмӑртура Бычонков юлташ бригади мала тухрӗ. Бригада коллективӗ уйӑхри задание 188 процент тултарчӗ, завода паха продукци кӑна туса пачӗ. Рощин юлташ бригади те ӳсӗм турӗ. Ку бригада иртнӗ уйӑхри задание 134 процент тултарчӗ.

Лайӑх производственника Бычонков юлташа нумаях пулмасть КПСС членӗн кандидатне илчӗç. Хастарлӑ бригадиршӑн ку вӑл пысӑк событи пулса тӑчӗ. Вӑл коллектив умӗнче коммунистӑн чыслӑ ятне таса усрама, ӗç тухӑçлӑхне куллен ӳстерсе пыма, лайӑх пахалӑхпа кӑна ӗçлеме сӑмах пачӗ.

Ӗç тухӑçлӑхне, уйрӑмах унӑн пахалӑхне ӳстерессишӗн пыракан кӗрешӳ вӑйланнӑ çемӗн вӑйланса пырать. Юлашки вӑхӑтра, апрель уйӑхӗнчипе танлаштарсан, цехра брак тӑвасси нумай чакрӗ. Цех коллективӗ малашне лайӑх пахалӑхлӑ продукци кӑна туса кӑларма обязательство илчӗ.

Н. КОЛЕСОВ.

Кружок ӗçӗ вӗçленчӗ

Вӑрнар больницинчи пуçламӑш парторганизаци çумӗнчи парти историне вӗренмелли кружокра (икӗмӗш çулхи) итогла заняти пулса иртрӗ. Итогла заняти вӗренекенсем материала тӑрӑшса вӗреннине кӑтартса пачӗ. Пропагандист пулса ӗçленӗ О. Красильникова юлташ хӑйне хушнӑ ӗçе тимлӗн туса пынӑ, вӑл занятисене лайӑх хатӗрленсе, вӑхӑтра ирттернӗ. Вӗренекенсем те занятисене йӗркеллӗ çӳренӗ. Вӗсем хӑйсем тӗллӗн конспектсем çырма лайӑх вӗренсе çитнӗ.

Парти историйӗн кӗске курсне вӗренисӗр пуçне, кружокра КПСС XIX-мӗш съездӗн, СССР Верховнӑй Совечӗн IV-мӗш сессийӗн материалӗсене вӗреннӗ.

Вӗренӳ çулӗ тӑршшипе тӑрӑшса ӗçлени халӗ аван палӑрчӗ. Вӗренекенсем калаçӑва активлӑ хутшӑнчӗç, ыйтусене тӗрӗс те тарӑн сутатса пачӗç.

Вӗренекенсем çитес вӗренӳ çулӗнче марксизм-ленинизм теорине тата тӑрӑшарах вӗренме пулни çинчен хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене каласа пачӗç.

А. ОРЕШКИН.

Сӗнтӗрвӑрринчен килнӗ хыпарсем

☆ Тава тивӗçлӗ учительница. Халӑха вӗрентес ӗçре нумай тивӗçлӗ ӗçсем тунӑшӑн Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ Сӗнтӗрвӑрринчи ялхуçалӑх техникумӗн преподавательницине София Ивановна Федотована Чӑваш АССР шкулӗсен тава тивӗçлӗ учительници ятне панӑ. Çакӑ С. И. Федотова юлташ техникумра татти-сыпписӗр 25 çул ӗçленине паллӑ тунӑ вӑхӑтра пулса иртрӗ. Çавна май техникумра вӗренекенсемпе преподавательсен пухӑвӗ пулчӗ.

Юбиляра сывлӑх суна преподавательсемпе вӗренекенсем сӑмах каларӗç. Юлашкинчен С. И. Федотова хӑйӗн ӗçне пысӑка хурса хакланипе хавасланса, сӑмах каларӗ, Совет çыннисемшӗн тӑрӑшакан Коммунистсен партийӗпе Совет правительствине тӗрен тав турӗ.

☆ Колхозниксен пуян пурнӑçӗ. Панкасинчи «Коммунизм» колхоз районта пайлӑ колхозсенчен пӗри. Колхоз нумай тырпул, пахча çимӗç туса илет. Çавна май колхозӑн та, унӑн членӗсен те тупӑшӗсем çултан-çул ӳссе пыраççӗ.

Ӗçкунӗ тӑрӑх илекен тырӑпа тата укçапа колхозниксем çулсеренех промышленность таварӗсем нумай туяннаççӗ. Кӑçал 20 колхозник велосипед тата икӗ колхозник мотоциклет туянчӗç. Халӗ 80 колхозникӑн велосипедсем пур. Кашни килте пекех самоварсем, никӗлпе витнӗ кроватьсем, çӗвӗ машинисем пур.

Колхозра радиоузел ӗçлет. 10 колхозник лампӑллӑ радиоприемникӗсем, 57 колхозник — детекторлӑ приемниксем лартнӑ. Колхозри киностационарта кашни ик-виçӗ кунта çӗнӗ кинофильмсем кӑтартаççӗ.

☆ Государство пулӑшӑвӗ. Колхозсенче выльӑх витисем тума, ӑратлӑ выльӑхсем туянма, сад тата хӑмла пахчисем тума государство нумай вӑхӑтлӑха укçа парса пулӑшать. Иртнӗ çулта выльӑх витисем тума тата фермӑсенчи ӗçсене механизацилеме 167 пин тенкӗ, ӑратлӑ выльӑхсем туянма 108 пин тенкӗ панӑ. Государствӑран нумай вӑхӑтлӑха кивçен укçа илсе районта выльӑх витисем тунӑ, чылай фермӑсенче кормозапарнисем, улӑмпа силос турамалли машинӑсем вырнаçтарса лартнӑ. Кивçен илнӗ укçапа иртнӗ çулсенче виçӗ гидроэлектростанцие тата пӗлтӗр пӗр теплоэлектростанцие ӗçе янӑ.

Государство ялхуçалӑх банкӗ урлӑ кӑçал та районти колхозсене нумай укçа кивçен парса пулӑшма палӑртнӑ.

☆ Драмкружок Мари республикинче. Районти культура çуртӗ çумӗнчи драмкружок юлашки вӑхӑтра А. Островский çырнӑ чылай пьесӑсене сцена çинче лартса пачӗ. Кружок руководителӗ И. Родионов юлташ ертсе пынипе лартнӑ «На бойком месте», «Поздняя любовь» спектакльсем ӑнӑçлӑн иртрӗç. Кӑçал драмкружок коллективӗ Мари АССР-ӗнчи Кокшайск ялне кайса «Поздняя любовь» спектакле лартса пачӗ. Ӑна курма халӑх нумай пуханнӑ.

Библиотека работникӗсен семинарӗ

Республикӑри М. Горький ячӗпе тӑракан библиотекӑра районсемпе ялсенчи библиотекӑсенче ӗçлекенсен виçӗ кунлӑх семинарӗ пулса иртрӗ. Семинара пурӗ 100 библиотекарь ытла пуханнӑ. Вӗсем библиотека техникине, ялсемпе районсенче халӑх хушшинче библиотекӑсен массӑллӑ ӗçӗсем çинчен лекцисем итлерӗç. Хӑйсен кулленхи ӗçӗнчи опычӗпе паллашрӗç.

Н. ИЛЬИН.

ФЕЛЬЕТОН

ТУССЕМПЕ ЮССЕМ

Районти ялхуçалӑх пайӗнче куллен [illegible] рӳллӗ ӗç пынӑ: пӗрисем [illegible] тунӑ, [illegible] рисем колхозсене [illegible] сырнӑ, виççӗмӗшӗсем плансем хатӗрленӗ.

— Сывлӑхсем-ши? — тенӗ вара унта пыракансем. — Хӑçан ан килӗ, яланах урпа вырнӑ чухнехи пек ӗçлеççӗ.

— Тавах, ырӑ сӑмахшӑн, — тенӗ ялхуçалӑх пайӗнчисем. — Ара, пирӗн заведующин тилхепи çирӗп. Кирлӗ таран хӑлӗх пек тытса пырать...

— Унсӑрӑн мар ӗнтӗ, — килӗшнӗ ӗçпе пыракансем.

Чӑн та, ирхине занятие пырсан, ӗçне мӗне тытӑниччен, хӑйӗн кабинетне кӗриччен заведующи пӳлӗмрен пӳлӗме çӳренӗ, мӗн пур-çука, кам хӑш вӑхӑтра пынине асӑрханӑ. Вара производствӑлла канашлу пухнӑ.

— Çак сӗтел-пукансене кирлӗ пек лартма, пирус тӗпӗсене илсе хума хӑçан вӗрентсе çитерес сире! — ӳсӑрлантарнӑ вӑл.

Çакӑн пек канашлусем заведующи тӑтӑшах ирттернӗ. Юлашкинчен вара, канашлу пӗтес умӗн, яланах çапла каланӑ:

— Эпир «Шарашкин кантурӗ» мар, районти ялхуçалӑх пайӗ. Районти! Пирӗн тӗрӗс те тикӗс ӗçлемелле. Нимрен ытларах — пур çӗрте те сыхлӑхлӑ пулмалла. Сӑпара карса ларас тавраш пулмалла мар.

Пӗррехинче, çавӑн пек тӗтӗм-сӗрӗмлӗ канашлу хыççӑн, ялхуçалӑх пайӗн главнӑй ветеринарнӑй врачӗ заведующи кабинечӗн алӑкне пырса шаккать.

— Юрать, ара, мӗн хыпарпа?

— Василий Александрович, — тенӗ главнӑй ветврач. — Эсир çакӑн пек канашлусем ирттерни манӑн кӑмӑла каять. Унта эсир каланӑ ӑслӑ сӑмахсем, паллах, пирӗн работниксен ӗçри активлӑхне çӗклеççӗ, вӗсен сисӗмлӗхне ӳстереççӗ. Эпӗ ӑна куллен сисетӗп. Анчах çавна каласшӑн: пурин çӳçне те пӗр турапа турас марччӗ. Сӑмахран, эпӗ главврач. Ун пек тусан, ытти сен умӗнче манӑн авторитет чакма пултарать. Ӳстеререх калӑсан, эпӗ ытларах çӗкленӗп. Вӑл сирӗншӗн те ырӑ. Эпир тата аслисем вӗт-ха...

— Эсир кӑна чӑн та тӗрӗс каларӑр, Даниил Миронович, — ирӗлсе кайнӑ заведующи. — Пирӗн хӑшне çӗклемелле, теприсене хистемелле. Унсӑрӑн аппарата çирӗплетме çук. Анчах хамӑрӑн пӗр тӗлдевлӗ пулас пулать.

— Василий Александрович! — тенӗ главврач, ӑна пӳлсе. — Эсир кӑна шӑп та лӑп манӑн шухӑша каларӑр вара...

— Кӗме юрать-и?

— Тепӗр чухне... — главврач тухса шӑвӑннӑ. Кабинета ялхуçалӑх пайӗн бухгалтерӗ кӗрсе тӑнӑ.

— Эсир тата, Мария Кузьминична, мӗнле сӑмах-юмахпа?

— Василий Александрович, — тенӗ бухгалтер ачаш сасӑпа. — Эсир пасӑрхине мана вырӑнсӑрах ытлашши каларӑр, эпӗ бухгалтер кӑна, мӗн кирлине йӑлтах тӑватӑп вӗт-ха.

— Çаплах. Анчах халӑх умӗнче пурне те тикӗслесе тухас пулать. Çавна ӑнланӑр эсир.

...Кун иртнӗ, çул иртнӗ. Ялхуçалӑх пайӗнче сав-савах «урпа вырнӑ чухнехи пек» ӗçленӗ. Кашниннех икӗ алла пӗр ӗç пулнӑ. Заведующий хӑйӗн кабинетӗнчен усӑлма тухнӑ, пӗр сӗтел патӗнчен теприн патне пынӑ.

— Даниил Миронович, мӗнле ӗçсем? — ыйтнӑ вӑл ун пек чухне.

— Ӗçлетпӗр. Кашни выльӑхах хӑйӗн ячӗпе калатпӑр. Сурӑха сысна темеспӗр, — ответленӗ главврач куç айӗн.

— Сирӗн тата, Мария Кузьминична, ӗçсем мӗнле шӑваççӗ?

— Кантур ӗçлет, касир укçа парать. Акӑ татах тепӗр ведомость пулать, — шӑлт-шалт туртнӑ шут шӑрçине хӑнӑхнӑ пӳрнисемпе бухгалтер.

Ялхуçалӑх пайӗ ӗçленӗ. Даниил Миронович та çӗкленсех пынӑ. Часах вӑл профсоюз местномӗн председателӗ пулса тӑнӑ.

Пӗррехинче, хӗрӳллӗ ӗç хыççӑн, профсоюз членӗсен пухӑвӗ пулнӑ. Унта чылайӑшӗсем çапла каланӑ:

— Даниил Миронович тӳрӗ кӑмӑллӑ çын мар — тенӗ.

— Эсир главврач пирки çапла калама хӑятӑр-и? Пӗтӗм чунтан парӑнса ӗçлекен çын вӑл. Пур ӗçе те тӗрӗс тӑвать. Халӗ унӑн авторитечӗ районта мӗнле çӗкленсе пырать. Çавна пӗлес пулать! — татса хунӑ заведующи.

— Кузьмина пирки тата мӗнле шутмарӑр? — [illegible] — Пӑлхапӑр... [illegible] вайӗ вӑл. [illegible] кӑларма пулать [illegible]!

— Ан та калаçӑр. Ун пек йӗркеллӗ те тирпейлӗ ӗçлекен хӗрарӑм тупаймасӑр эсир! — каллех касса татнӑ заведующи.

Çакӑн пек калаçусем ялхуçалӑх пайӗн коллективӗнче пӗрре кӑна пулман. Анчах заведующи вӗсене пичче хумасӑр хӑварман. Аслисем вара çаплах пӗр тӑверен тухман.

— Василий Александрович, — тенӗ пӗррехинче главврач, хире-хирӗç ларнӑ чухне. — Мана сиртӗн пулӑшу кирлӗ.

— Пулӑшу тенине манран мар тӑк, камран-ха. Анчах мӗн-ха?

— Мӗн пулассине тӑвасӗн, пӗрескерӗн, Иванов тенӗскерӗн ӑне хавшанӑ пулнӑ. Мӗн тӑвас-ха тет вӑл. Ӗнине пус, кавайне çи, пӑх юрӑхла. Ӗçӗ те çавӑ кӑна, тетӗп. Каланӑ — тунӑ. Ку вӑл февралӗн 4-мӗшӗнче пулчӗ. Унтан: ку ӗнешӗн страховка укçи илме пулмасть-ши? тет хайхи Иванов. Вара тепӗр кунне, февралӗн 5-мӗшӗнче, ӗнене ирӗксӗртен пуснӑ, кавайне бракланӑ тесе, страховка укçи илме заключени патӑм. Ӗне кавайне çитерсе? тет манӑн Иванов, страховка укçи илнӗ хыççӑн. Апла та тума пулать, тетӗп. Вара пичет хурса та паратӑп хайхине ӗне кавайӗ çине. Мӗн тата — пӗр ӗнерен икӗ тупӑш турӗ.

Ку юмахри пек кӑна, çавӑншӑнах айӑпа кӗртессӗ-и вара?

— Ку кӑна мар çав. Тимофеев тенӗскер, «За коммунизм» колхозра тата ытти тисене те ӗнисене пуссан страховка укçи илме çавӑн пек заключенисем çырса патӑм.

— Ырӑ кӑмӑллӑ вара эсир, Даниил Миронович. Чӑн та ырӑ кӑмӑллӑ!

— Ара, кӑмӑлне кура турамӗ...

— Халӗ вара характеристикине мӗнлерех çырмалла? — Суталса пӑхнӑ заведующи главврач çине.

— Ун пирки сире чӑрмантарас мар терӗм, хамах çыртӑм, кут аллӗти кӑларса хунӑ заведующи умне главврач.

— Питӗ ырӑ. Улӑштарас-тӑвас кӑмӑлӑм çук, — алӑ пусса, пичет хурса çирӗплетнӗ заведующи.

Халӑх суйӗ вара çав характеристикӑна самаях шута илнӗ.

— Пире сума сусассӑн та... — юрланӑ каллех Миронов. Профсоюз укçине йӗкӗртнӗ те йӗкӗртнӗ вӑл. Шӑп та лӑп 2.951 тенкӗ те 50 пус хӑйӗн кӗсйине чикнӗ.

— Шанӑ йӑвара чӑн та кайӑк пулман иккен! — шарт çапнӑ аллисене ялхуçалӑх пайӗнче пӗрисем. Теприсем Миронова вӗренме янӑ.

— Ӗçлетпӗр, укçа илетпӗр, — яланхи пекех шӑлт та шӑлт вылятнӑ шут шӑрçине Кузьмина бухгалтер.

Вӑл ӗç укçи илме ведомость хыççӑн ведомость тунӑ, унта кирман-патмен, штатра тӑман çынсене кӗртсе пынӑ. Çапла та тунӑ: пӗрисене ӗç укçи бюллетень тӑрӑх соцстрах тӳленӗ, çавсемшӗнех ӗç укçи тепӗр ведомоçпа илнӗ. Цӗрисем урӑх çӗре ӗçлеме куçнӑ, вӗсемшӗн, ялхуçалӑх пайӗнчен кайнӑ хыççӑн та, ӗç укçи илсе тӑнӑ.

— Антрамастпӑр пулмалла, — алӑ пусса çирӗплетнӗ ведомоçсене ялхуçалӑх пайӗн заведующийӗ Шумилов.

— Пултаратпӑр пулмалла, — ответленӗ главврач Миронов.

— Пултарас çук, пулӑ тытас çук мӗн шыв хӗрне ма кайс, — тенӗ вӗсене хирӗç Кузьмина бухгалтер, ведомоçсем çине сынсемшӗн ултӑласа алӑ пусма хӑнӑхнӑскер.

Шалчи тулласса сиснӗ Кузьмина. Вара вӑл, пулнӑ-пулмах тесе, ӗç укçи илнӗ те тухса шӑвӑннӑ.

Туссемпе юссем государство кассинчен 18 пин те 100 тенкӗ вӑрланӑ.

Халӗ вулакан çапла ыйтма пултарать:

— Райсовет исполкомӗ мӗн пӑхса тӑнӑ?

Райсовет исполкомӗн председателӗ пулнӑ И. Соловьев хӑй те пӑтранчӑк шывра пулӑ тытма ӳркенмен, 1952 çулхи ноябрьте ялхуçалӑх пайӗн кассинчен 1.650 тенкӗ укçа илнӗ те, халӗ те тавӑрса паман.

Шумилова колхоза ӗçлеме янӑ, вӑл халӗ председатель пулса ӗçлет. Миронова вӗренме янӑ, вӑл хӑйӗн квалификацине ӳстерет. Кузьмина — тарса çӳрет.

Н. ПУШКИН.

Тырпул тухӑçне ӳстермелли майсем

Пирӗн колхоз — районти вӑрлӑх хуçалӑхӗ. Çавӑнпа унӑн тырпул туса илес ӗçре ытти колхозсене пример кӑтартса ӗçлемелле. Эпӗ çак статьяра хамӑрӑн хӑшпӗр опытпа паллаштарасшӑн, тырпул тухӑçне ӳстермелли майсем çинчен каласа парасшӑн.

Эпир акса тӑвакан çӗр кӳршӗ артельсен çӗрӗнчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмасть. Артель хирӗсем урлӑ виçӗ çырма иртет. Тӑпра тӑмлӑ, хӑйӑрлӑ. Тӑпра пахалӑхӗ начар пулни те, колхоз çултан-çул тухӑçлӑрах тырпул туса илет. Пӗлтӗр суртрисен тухӑçлӑхне ӳстермелли плана чылай ирттерсе тултарнӑ.

Колхоз тунӑ çитӗнӳсем мӗнрен килеççӗ-ха?

Сталинла пилӗкçуллӑхсенче государство ялхуçалӑхне пуян та чаплӑ техника пачӗ. Пирӗн артелӗн тырпул акса тумалли тата пухса кӗртмелли тӗрлӗ машинисем пур. Ялхуçалӑхӗнчи нумай ӗçсене МТС туса парать. Кӑçал пӗтӗм уй-хир ӗçӗсенчен 85 процентне машина-трактор станцийӗ тӑвать.

Хӑватлӑ техникӑна усӑллӑ [illegible] çӗр ӗçне малта пыракан агротехника хушнӑ пек туса пыма май парать. Тракторсемпе ӗçленине пула тӑпрана сухалакан сийне чылай тарӑнлатрӑмӑр. Пӗлтӗр кӗрхи сухана 20—25 сантиметр тарӑнӑш туса хӑвартӑмӑр.

Пирӗн тивӗç — пуян техникӑпа усӑ курса, çӗрӗç культурине ӳстерессе. Ку тӗлӗшпе эпир çултан-çул нумай ӗçсе туса ирттеретпӗр. [illegible] сухалама ӗлкӗрсе [illegible] сухана акса тумалли пусӑ саврӑнӑшне кӳртрӗмӗр. Уйрӑмах пурӑнӑçне ... [illegible] пысӑк [illegible] пуçне акса пыратпӑр. Халӗ кирлӗ пусӑ саврӑнӑшӗнче суха [illegible] хуйӑрсем 223 гектар шутланаççӗ.

Колхоз хирӗсенче вуншар уйлӑ икӗ тӗрлӗ пусӑ саврӑнӑшӗ йӗркеленӗ: пӗри — тырпул туса илмелли, тепри — выльӑх апачӗ акса тумалли. Пӗррӗмӗш пусӑ саврӑнӑшне 605 гектар, иккӗмӗш пусӑ саврӑнӑшне 298 гектар çӗр кӗрет. Артель усӑ курман çӗр чиккине тата пусӑсем хушшине вӑрман тӑрӑхӗсем тунӑ. Çак тӑрӑхсем, пӗрле шутласан, 7,4 гектара çитеççӗ.

Пирӗн колхозӑн опычӗ çакна кӑтартса парать: пусӑ саврӑнӑшӗсенче культурӑсене тӗрӗс вырнаçтарни, çӗре лайӑх ӗçлесе тӑни, çӗртме сухине тарӑн туни, уй-хире тислӗк тата минераллӑ удобренисем нумай кӑларни, районлӑ сортлӑ вӑрлӑх акни — çаксем пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илмелли тӗп никӗс пулса тӑраççӗ. Суркунне калчасене апат пама 1.000 центнер минераллӑ удобренисемпе усӑ курнӑ. Халӗ çӗртме пуссисене 12 пин лав тислӗк кӑларнӑ.

Артель тӑвакан агротехникӑлла ӗçсен шутӗнче тырпула çӗнӗ майпа акса хӑварни паллӑ вырӑн йышӑнать. Суртрисене хӗреслӗ майпа, анлӑ ретлӗ е ансӑр ретлӗ акни, паллӑ ӗнтӗ, вӑрлӑхсене пӗр тикӗс вырнаçтарма, тӑпрари нӳрӗке сыхласа хӑварма пулӑшать.

Ака ӗçӗн малта пыракан меслечӗпе пирӗн колхозра кӑçал кӑна мар усӑ курнӑ [illegible]. Пӗлтӗр [illegible] бригадӑсем сурхи тулла хӗреслӗ майпа акса хӑварчӗç. Тӑпра пахалӑхӗ пӗр, пекех пулни те, вӗсем анлӑшӗ пек акнӑ бригадӑсенчен гектар пуçне 5-шер центнер ытларах тулӑ туса илчӗç.

Иртнӗ çулсенчи пата опыта шута илсе, колхоз кӑçал сурхи тулла пӗтӗмпех хӗреслӗ майпа акса хӑварчӗ. 75 гектар сурхи тулӑ тип-тикӗс шӑтса тухрӗ, калчасем парка çитӗнеççӗ.

Пирӗн тепӗр тӗрлӗ опыт вирпе хура тула анлӑ ретпе акни усӑллине кӑтартса пачӗ. Кӑçал эпир çав культурӑсене сеялкӑн пӗр сошникне сиктерсе акса хӑвартӑмӑр.

Тырпул тухӑçлӑхӗ ака меслетӗнчен кӑна мар, вӑрлӑх нормине йӗркеленинчен те килет. Пирӗн условисенче вӑрлӑх акмалли нормӑсене кӑштах ӳстерни вырӑнлӑ. Сӑмахран, тулла хӗреслӗ майпа акнӑ чухне нормӑна ретлӗ майпа акнинчен 15 процент ӳстеретпӗр. Вӑрлӑх участокӗсенче вара гектар пуçне 250 килограмм акнӑ.

Вӑрлӑх акмалли нормӑна тунӑ чухне уй-хир культурисен биологиллӗ уйрӑмлӑхӗсене, тӑпра пахалӑхне шута илетпӗр. Пӑрсана пысӑкрах нормӑпа аксан унӑн тухӑçлӑхӗ чылай ӳсни палӑрчӗ. Пӗлтӗр гектар çине 180 килограмм вӑрлӑх акнӑ бригадӑсем гектартан 12-шер центнер пӑрса туса илчӗç. Çав вӑхӑтрах гектар пуçне 200 килограмм вӑрлӑх кӗртнӗ бригадӑсен пӑрса тухӑçлӑхӗ 3-шер центнер ытларах пулчӗ. Кӑçал колхозри пур бригадӑсем те «Торсдаг» пӑрсана икшер центнер нормӑпа акрӗç.

Сурхи тулла хӗреслӗ майпа акнӑ чухне çӗре пӗрчӗллетнӗ удобренисем хывнӑ. Суракки малтанхи кунӗсенче суйӑрсем хыççӑн сивӗ çилсем пулчӗç, çавсем тӑпран сиелтн сийне хытарчӗç. Çавӑнпа тулӑ тата сӗлӗ акнӑ пусӑсене сӳрелесе семсетме тивнӗ. Кӗрхи калчасене вара пӗтӗмпех сӳрелерӗ, вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе апат пачӗ. Кӗрхи тулӑ калчисем юр айӗнчен начар тухнӑ лаптӑксене, Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз примерӗпе, сурхи тулӑ акса хӑвартӑмӑр.

Кӑçалхи суркунне çанталӑк вӑрмаллӑ, уйӑлса тӑчӗ. Çавӑн пек условисенче сурамине хӑвӑрт ирттерни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Пирӗн уй-хир бригадисем, механизаторсемпе тачӑ çыхӑнса ӗçлесе, сурхи тырӑсене 5—7 кун хушшинче акса пӗтерчӗç, колхоз сурхи мӗнпур ӗçсене майӑн 25-мӗшӗ тӗлне вӗçлерӗ. Уй-хир ӗçӗсене комплекслӑ майпа туса пыни суртрисем акас тата калчасене апат парас ӗçсене пӗр вӑхӑтра туса ирттерме май пачӗ. Колхоз ирхи çӗртме вӑхӑтра туса хӑварчӗ, халӗ енӗрсе ӳсекен тырпула пухса кӗртме хатӗрленет.

Колхозра çӗрӗç ӑсталӑхне алла илнӗ кадрсем ӳссе çитӗнчӗç. Колхоз агрономӗ А. А. Кулаевский юлташ агротехника кӑтартса панисене пурнӑçласси çине тӗплӗ пӑхать. Машина-трактор станцийӗн М. Бугреев юлташ ертсе пыракан бригади пирӗн колхозра ялхуçалӑх ӗçӗсене пысӑк пахалӑхлӑ тӑвать. Кирилпа Николай Ларионовсем — трактористсем. Вӗсем суракинче çӗрне-кунне пӗлмесӗр, пысӑк тухӑçлӑхпа ӗçлерӗç. Артель сеяльщикӗсем Е. Матвеева, А. Ларионов, А. Сергеев тата И. Минин юлташсем 13 ретлӗ сеялкӑпа кашни кун 8—10-шар гектар акрӗç.

Пирӗн колхоз членӗсем кӑçал гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ, 165 центнертан кая мар çӗрулми туса илме сӑмах пачӗç. Вӑйлӑ тырпул пиккӗсне суракинче начар мар хывса хӑвартӑмӑр. Анчах çак тырпула пӗтӗмпех хамӑр алла илесси ӑна мӗнле пухса кӗртнинчен килет.

Эпир тырпула пӑхса çитӗнтерес тата пухса кӗртме хатӗрленес тӗлӗшпе чылай ӗçсем турӑмӑр. Суртрисемпе нумай çул ӳсекен курӑксен пуссисене çумкурӑксенчен пӗтӗмпех тасатнӑ. Витнӗ итемсемпе авӑнсене, ҫнейӑсемпе ытти ӗç хатӗрӗсене çак кунсенчех юсаса, тирпейлесе çитеретпӗр. Колхоз правленийӗпе пуçламӑш парторганизаци тырпул пухса кӗртмелли ӗç планӗпе политикӑлла-массӑллӑ ӗç планне туса хатӗрлерӗç.

Я. РУССКИН,
«Динамо» колхоз председателӗ.
Куславкка районӗ.

„Коммунизм ялавӗ" хаçатра çырнӑ хыççӑн

„Хӑшне ӗненмелле"

«Коммунизм ялавӗ» хаçатра майӑн 27-мӗшӗнче пичетленнӗ «Хӑшне ӗненмелле?» ятлӑ корреспонденцире Шӑхасан районӗнчи «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаçата хӑшпӗр колхозсем пирки тӗрӗс мар çырнӑшӑн, вулакансене ӑнланмалла мар материалсем пичетленӗшӗн критикленӗччӗ.

КПСС Шӑхасан райкомӗ «Коммунизм ялавӗ» хаçат районти хаçатӑн çитменлӗхӗсене тӗрӗс кӑтартса пани, хӑшпӗр колхозсенче кантӑр акни тата çӗрулмипе пахча çимӗç лартни çинчен тӗрӗс мар çырнӑшӑн хаçат редакторне Яковлев юлташа асӑрхаттарни çинчен пӗлтерчӗ.

„Тимлӗх пулман пирки"

Майӑн 24-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаçатра пичетленнӗ «Тимлӗх пулман пирки» ятлӑ çырура Комсомольски районӗнчи «Октябрь ялавӗ» хаçат шкулсенче вӗренекенсем хушшинче ӑмӑрту сарӑлнӑ пек çырса йӑнӑш тунине кӑтартса панӑ, шкулсенчи вӗрентӳпе воспитани ӗçӗнчи социализмла ӑмӑртӑва тӗрӗс ӑнланманни [illegible] кӑларни çинчен аса илтернӗ.

«Октябрь ялавӗ» хаçатӑн çитменлӗхӗсене майӑн 31-мӗшӗнче пичетленнӗ «Малта пыракансен опычӗ-ши ку?» ятлӑ çырура та кӑтартса панӑ.

КПСС Комсомольски райкомӗ «Тимлӗх пулман пирки» тата «Малта пыракансен опычӗ-ши ку?» ятлӑ çырусене райкомӑн бюро ларӑвӗнче сӳтсе явни çинчен пӗлтерчӗ. Райком бюрӗ хаçат редакторне Квасов юлташа ӗçри ответлӑха ӳстерме, хаçат редакцийӗн ӗçне партин XIX-мӗш съездӗн решенийӗсем хушнӑ пек туса пыма кӑтартса панӑ.

Шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрлер

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Партин XIX-мĕш съезчĕ халăха вĕрентес енĕпе пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене пурнăçласа, районти шкулсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче чылай ӳсĕмсем тăваççĕ.

Вĕренӳ ĕçне татах та лайăхлатассишкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнинчен нумай килет. Çакна шута илсе, КПСС райкомĕпе район Совечĕн исполкомĕ шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес пирки лайăх решенисем йышăнчĕç. Май уйăхĕн пуçламăшĕнче райсовет исполкомĕн ларăвĕнче вĕренӳ çулне хатĕрленес пирки ĕç планĕ çирĕплетнĕ.

Исполком çапла палăртрĕ: иртнĕ çулта вĕренӳ çулне хатĕрленес пирки чылай ситменлĕхсем пулнă. Шкул çулне ситнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарман. Шкулсем валли вутă, вĕренӳре кирлĕ пособисем сителлĕксĕр пулнă. Çак ситменлĕхсене шута илсе, исполком шкулсене вĕренӳ çулне лайăх хатĕрлесе ситерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртрĕ: ял Совечĕсемпе сутĕç пайне тата шкул руководителĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленме, шкул çулне ситнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарассишĕн сине тăрса ĕçлеме хушса хăварчĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, кăçал районти шкулсем пĕтĕрхинчен чылай йĕркеллĕрех вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнчĕç. Нумай çĕрте шкулсене юсаççĕ, наглядлă пособисем тăваççĕ. Шкулсене вĕренӳ çулне лайăхрах хатĕрлесе ситерессишĕн ял Совечĕсем, шкулсем хушшинче ăмăрту саралса пырать. Ку тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри хула Совечĕ Çĕрпӳ хула Совечĕпе ăмăртать.

Кăçал райсовет исполкомĕн планĕ тăрăх сичĕ шкула тĕпрен юсамалла, Кĕçĕн Астакассинчи, Пуснаркассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулсенче учительсем валли хваттерсем тумалла.

Чылай çĕрте шкулсене март-апрель уйăхĕсенчех юсама тытăннă. Акă, Кайри Чиперуйри пуçламăш шкулта (заведующийĕ Антонов юлташ) майăн 15-мĕшĕ тĕлне шкул çуртне хăмапа витнĕ. Çак ĕçе тунă çĕрте ял çыннисем пысăк пулăшу пачĕç. Колхозниксем строительство материалĕсем турттарса килне, вут-шанкă хатĕрлеме, шкул тавра карта тытма тăтăшах пулăшса пычĕç.

Кĕçĕн Астакассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Бланов юлташ) учительсем валли икĕ хваттер туса пĕтереççĕ. Çак шкултах кăмакасем тăваççĕ, чӳречесене кантăк лартаççĕ. План тăрăх Сĕнтĕрпуçĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем валли икĕ хваттер тума палăртнă. Халĕ çавна тума йывăç хатĕрлеççĕ. Шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсем йывăç хатĕрлеме, турттарса кăларма активлă пулăшаççĕ. Кĕçех Кушникра сичĕ çул вĕренмелли шкул çуртне туса пĕтереççĕ. Кунта халĕ кăмакасем çеç тумалла. Çапла вара шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр пулать.

Кăçал район Совет исполкомĕн решенийĕпе ситес вĕренӳ çулĕнче шкулсем валли 2.560 кубометр, учительсен хваттерĕсем валли 1.520 кубометр вутă уйăрнă. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне шкулсем 1.700 кубометр вутă хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен 600 кубометр вутă юлнă. Çапла вара халĕ районти шкулсенче 2.300 кубометр вутă пур. Анчах шкулсем валли вутă хатĕрлессине пур çĕрте те лайăх йĕркеленĕ теме çук-ха. Хăшпĕр шкулсем çак ĕçе пачах тытăнман. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Лапри Чăрăшкассинчи, Пĕчченхырти, Кайри Шĕнерпуçĕнчи, Уплерти пуçламăш шкулсем начар ĕçлеççĕ.

Учительсен хваттерĕсем валли вутă хатĕрлесси тата вăрмантан кӳрсе килесси сителлĕксĕр пулса пырать. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне виç-тăват шкулта кăна учительсем валли вутă сителлĕклĕ хатĕрленĕ.

Кăçал шкулсенчи библиотекăсем валли çĕнĕ кĕнекесем нумай туянма палăртнă. Хальхи вăхăтра районти шкулсенче 5 пин тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ кĕнекесем кӳрсе килнĕ. Çавăн пекех физика, химия кабинечĕсем те наглядлă пособисемпе пуянланса пыраççĕ. Халĕ Главснабпросăн Шупашкарти тата Хусанти магазинĕсенче 12 пин тенкĕлĕх вĕренӳре кирлĕ тĕрлĕ пособисем туяннă. Шкулсем валли оборудовани илме 40 пин тенкĕ ытла расходланă. Районта кивĕ кĕнекесене сутăн илессине йĕркеленĕ. Кĕнекесем сутакан магазинра чăваш шкулĕсенче кирлĕ 13 тĕслĕ кĕнеке, вырăс шкулĕсем валли 37 тĕслĕ кĕнеке кӳрсе килнĕ.

Нумаях пулмасть районти шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсен пĕрлехи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатмалли майсем, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси, учительсен августри канашлăвĕсене ирттересси çинчен тухса каларĕç. Канашлура пулнисем пурте пĕр кăмăллă пулса, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕç. Уйрăмах политехникăлла вĕрентĕве лайăхлатмалли майсем çинчен нумай каларĕç. Çуллахи вăхăтра шкулсем валли вырăнти вăйпа наглядлă пособисем хатĕрлеме, шкулсем çумĕнчи опытлă участоксен ĕçне лайăхлатма, гербарисемпе коллекцисем пухма, сăнавлă ĕçсем тума палăртрĕç.

Районти нумай шкулсем политехникăлла вĕрентĕве тивĕçлипе йĕркелес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Турханкассинчи вăтам шкулти биологи учителĕ Михайлова юлташ ертсе пынипе биологи кабинечĕ валли тĕрлĕ оборудовани хатĕрленĕ. Унта ачасем практикăлла ĕçсем туса ирттереççĕ. Çак шкулта физика учителĕ Иванов юлташ ертсе пынипе сиапе ĕçлекен двигатель тунă. Электротехникăпа опытлă ĕçсем тунă çĕрте çак двигатель паракан энергипе усă кураççĕ. Ачасем двигатель мĕнле ĕçленипе питĕ интересленеççĕ. Шкул ачисенчен хăшпĕрисем çавăн пек двигательсем хăйсен килĕсенче те тунă, уроксене хатĕрленнĕ чухне усă курнă.

Хальхи вăхăтра шкул администрацийĕ электростанци тума ыйту лартнă. Шкулта опытлă участок ĕçне те аван йĕркеленĕ. Калас пулать, çак участок чăннипех питĕ лайăх лаборатори пек пулнă.

Районти нумай ачасем пионер лагерĕсенче, экскурсисемпе походсенче, Шупашкарти музейсемпе историллĕ паллă вырăнсенче пулаççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ачасем колхоз ĕçне хутшăнаççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тунă малтанхи ӳсĕмсемпе пĕрлех ситменлĕхсем те тĕл пулаççĕ. Районти финанс органĕсем шкулсен çуртĕсене юсама, пособисем туянма укçа-тенкĕ сителлĕ уйăрса памă тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр ял Совечĕсем шкулсем валли пĕр пус та укçа уйăрман.

Е. ЕФИМОВ,
Сĕнтĕрвăрри районĕнчи сутĕç пайĕн заведующийĕ.



Канаш хулинче çĕнĕ вăтам шкул çуртĕ тăваççĕ. Унта 440 ача вĕренмелле пулать. Халĕ шкул çуртĕн стенисене штукатурка тума пуçланă. Ку ĕçре И. М. Кукушкин штукатурщик паха тĕслĕх кăтартать, кулленхи ĕç нормине 150—160 процент тултарать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. М. Кукушкин штукатурщик ĕçре (сулахайра); çĕнĕ шкул çуртĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕсем.

Вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн

КУСЛАВККА. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкул коллективĕ çĕнĕ ӳсĕм турĕ. Экзаменсем чылай учительсем пархатарлă ĕçленине, ачасем пирĕн пĕлӳ илнине кăтартса пачĕç. Пĕр класрах иккĕмĕш çул вĕренме хăварнă ачасен хисепĕ пĕлтĕрхинчен чылай чакрĕ. Уйрăмах аслă классенче вĕренекенсем экзаменсем лайăх тытни савăнтарать.

Паллах ĕнтĕ, 1952—53-мĕш вĕренӳ çулĕнче тунă çитĕнӳсем пире лăпланса ларма ирĕк памаççĕ. Умра çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленесе кĕтсе илес задача тăрать. Ситес çулсенче вăтам шкулсенче политехникăлла вĕренĕве кусма кирлĕ ĕçсем туса ирттермелле.

Мĕнле хатĕрленетпĕр-ха эпир хамăр умра тăракан пысăк задачăсене пурнăçлама?

Шкул çуртне иртнĕ çулсенче тĕпрен юсанă. Стенасене шалтан штукатуркăласа, тултан хăма çапса сулă сĕрăпа сăрланă, çурт çине шиферпа витнĕ. Халĕ коридорсемпе классене шалтан илемлетсе ситерес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Çак ĕçсене тума пире 22 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Коридорсемпе класс пӳлĕмĕсене фанер панелсемпе çапса тухатпăр. Иккĕмĕш хута улăхмалли карталашкасене çĕнĕрен тăватпăр. Асăннă ĕçсене çурри ытла пурнăçланă. Çав вăхăтрах классемпе чӳречесене юсаса пĕтернĕ. Кăмакасене юсаса ĕç те вĕçленсе пырать.

Хĕл каçа хутма 390 кубометр вутă кирлĕ. Çавăн чухлĕ вутта хатĕрлесе хунă, Куславкка çумĕнчи Шахтарка шывĕ урлă кĕпер хывсан, турттарма тытăнатпăр. Юсав ĕçĕсене тăвас, вутă хатĕрлесе турттарас ĕçре пире ачасен ашшĕ-амăшĕсем нумай пулăшаççĕ.

Пирĕн шкулта сĕтелсемпе пукансем, парттăсемпе доскасем тата ытти вĕренме кирлĕ япаласем сителлĕклĕ. Шкул столярĕ М. Данилов юлташ пĕлтĕр çĕнĕрен 18 партта тунă. Кăçал вăл хăшпĕр парттăсене юсать, пурне те тепĕр хут сăрлать.

Иртнĕ çулсенче лартнă йывăçсем шкул картишне симĕс тумпа витрĕç. Шкул картишне симĕслетме 330 тĕп йывăç, темиçе пин тĕп сырла йывăççисем лартнă. Хура хурлăхан, йĕплĕ хурлăхан, хăмла сырли тата ытти йывăççисем симĕссем паракан пулчĕç. Кăçал çуркунне лартнă çăкасем те лайăх чĕрĕлчĕç.

Вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ чухне пĕр ыйтăва та манса хăварма юрамасть. Учебниксемпе, тетрадьсем, пособисемпе приборсем сителлĕклĕ пулмалла. Нумаях пулмасть эпир барографпа термограф тата чылай приборсем туянтăмăр. Вĕренекенсене учебниксем туянтарас енĕпе организациллĕ мерăсем йышăннă. Шкул библиотеки çĕнĕ кĕнекесемпе пуянланчĕ.

Май уйăхĕнче шкул çулне ситнĕ ачасене шута илсе тухнă. Пĕррмĕш класра вĕренекенсен хисепĕ кăçал пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах пулать. Ситес вăхăтра хамăр шкул районне кĕрекен ачасене тепĕр хут шута илсе тухатпăр. Ку тĕлĕшпе район центрĕнчи кашни урама никĕ шер учитель çирĕплетнĕ.

Кирек мĕнле ĕçĕн анăçлăхне те кадрсем татса параççĕ. Пирĕн шкулта хăйсен ĕçне юратакан, опытлă учительсем ĕçлеççĕ. Шкул коллективĕ халăха вĕрентес тĕлĕшпе 42 çул пархатарлă ĕçлекен РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници А. Н. Золотова ятне мухтаса асăнать. А. Стародумова, Н. Лившиц тата А. Ефимова учительницăсем те ĕçре палăрса пыраççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли мĕнпур ĕçсене июль уйăхĕнче туса пĕтерессишĕн кĕрешет пирĕн шкул коллективĕ.

И. НИЛОВ,
Куславккари 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ.

Ситменлĕхсене халех пĕтермелле

ИШЛЕЙ. Районти хăшпĕр шкулсем ситес вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленеççĕ. Сынайкассинчи, Апат Кĕнерти сичĕ çул вĕренмелли, Чакакарти пуçламăш шкулсем вутă сителлĕклĕ хатĕрлерĕç, вĕренӳре кирлĕ наглядлă пособисем туянчĕç. Нумай çĕрте шкул çуртĕсене, учительсен хваттерĕсене юсаççĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, районта вĕренӳ çулне хатĕрленесси кирлĕ пек пулса пырать теме çук-ха. Мăн Маркари сичĕ çул вĕренмелли шкул (директорĕ Н. Ильин) çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме халĕ те пуçăнман. Кунта иртнĕ çулта та вĕренӳ çулне сителлĕксĕр хатĕрленнĕ пулнă. Çавна пула вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем палăрчĕç. Вутă сителлĕксĕр пулнă пирки хĕллехи вăхăтра йывăрлăхсем пулнă. Кăçал та кунта нимĕн чухлĕ те вутă хатĕрлемен. Райсовет исполкомĕ шкул çуртне юсама 10 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Анчах ял Совет председателĕ Шкальков юлташпа шкул директорĕ Ильин юлташ шкула юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

— Сентябрь уйăхĕччен вăхăт пур-ха, унччен шкула юсама çеç мар, çĕнĕ çурт туса лартма та пултаратпăр,—тет ял Совет председателĕ Шкальков юлташ.

Паллах, çакнашкал лăпкăлăх тытăмĕнче пурăнсан, шкул çуртне кăçал юсассине шанма йывăр. Шкул валли çĕнĕ парттăсем туянмалла, кивvисене юсамалла. Кĕнекесемпе наглядлă пособисем сителлĕксĕр.

Шкулсене вĕренӳ çулне хатĕрлесси Тăрăнри сичĕ çул, Мăн Катрасри, Хачăкри, Энтимĕркассинчи пуçламăш тата ытти чылай шкулсенче те япăх пырать. Иртнĕ çулта Энтимĕркассинчи шкул çуртне юсаман пирки хĕллехи кунсенче ачасене йĕркеллĕ вĕрентме май килмен. Пĕр класри кăмака вутă хутма пачах та юрăхсăр пулнă. Паллах, кунта вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхĕ çинчен каламалли те çук. Çавăнтан шкул заведующийĕн А. Пономарев юлташпа ял Совет председателĕн П. Терентьев юлташăн тивĕçлĕ выводсем тумалла пулнă. Анчах кунта кăçал та вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнман-ха. Тăрăнри сичĕ çул вĕренмелли шкул пирки те çавнах каламалла. Шкул директорĕ Павлов юлташ кăçал та çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме васкамасть. Вутă хатĕрлеме тытăнман, ытти ĕçсене тăвасси çинчен пачах асăнмаççĕ.

Шкулсем валли вутă хатĕрлесси районта уйрăмах начар тăрать. Ситес вĕренӳ çулĕнче районти 32 шкул валли 4.000 кубометр вутă кирлĕ пулсан, июнĕн 9-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 654 кубометр çеç хатĕрленĕ. Районта 5 шкул вутă хатĕрлеме пачах тытăнман. Шкулсене юсама панă 100 пин тенкĕ укçаран 15 пин тенкипе çеç усă курнă.

Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнине куллен тĕрĕслесси, ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме пулăшасси— районти сутĕç пайĕн кулленхи тивĕçĕ. Халлĕхе сутĕç пайĕн работникĕсем фактсене регистрацилениссĕр пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ. Комсомол организацийĕсем те шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе кирлĕ пек хутшăнмаççĕ.

1952—53-мĕш вĕренӳ çулĕнче районта пурне те вĕрентмелли закона пурнăçламан, 20 ача шкул тулашĕнче юлнă. Вĕренӳ çулĕнче 72 ача пĕр сăлтавсăрах вĕренме пăрахнă. Анчах вĕсене каялла шкула илсе пыма тăрăшман. Ишлейри вăтам шкулта кăна 16 ача вĕренме пăрахнă.

Районти сутĕç пайĕн педагогика кабинечĕ учительсен ĕçри квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе пысăк пулăшу пама тивĕç. Анчах та иртнĕ вĕренӳ çулĕнче педагогика кабинечĕ пилĕк-улта уйăх хушши ĕçлемен. Унта ĕçлеме условисем те пулман. Кабинета хĕлĕпе те хутман. Çавна пула унăн алăкĕ çинче яланах çăра çакăнса тăчĕ. Педагогика кабинечĕ Ишлейри вăтам шкулти пĕчĕк пӳлĕмре вырнаснă. Районти нумай учительсем çак кабинет ăçта вырнаснине те пĕлмеççĕ. Ун валли ятарласа тунă çĕнĕ çуртра çынсем пурăнаççĕ. Районти сутĕç пайĕн çак ыйту пирки тĕплĕнрех шутласа пăхмалла. Педагогика кабинечĕ ĕçне лайăхлатмалла, вăл яланах йĕркеллĕ ĕçлетĕр.

Пĕр уйăх каялла район Совечĕн иккĕмĕш сессийĕ шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес ыйтăва сӳтсе явса, ку ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ. Анчах та райсовет исполкомĕпе ял Совечĕсем тата шкул руководителĕсем сесси решенийĕсене тимлĕн пурнăçласа пыни курăнмасть-ха.

Ф. МАЛЫШКИН.

Техникумри ĕçсем

Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленет. Çак кунсенче кабинетсемпе коридорсене тата залла юсарĕç. Стенасемпе маччасене сăрларĕç.

Çавăн пекех студентсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Халĕ студентсен общежитине юсаççĕ.

Г. КРАСНОВ.

Вĕренекенсене лайăх кĕтсе илме тăрăшатпăр

ÇЕМĔРЛЕ. И. Н. Ульянов ячĕпе тăракан вăтам шкул Хутар ял Совет территорине кĕрет. Унта пирĕн ял Советĕнчи ачасем кăна мар, çывăхри 12 ял ачисем вĕренеççĕ.

Шкулта вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ял Совечĕн ответлăхĕ уйрăмах пысăк. Çакна яланах асра тытса, ял Совечĕ шкул ĕçĕпе тăтăшах интересленет. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче эпир шкул ĕçĕ çинчен пĕр хут ял Совет сессийĕнче, икĕ хут исполком ларăвĕнче сӳтсе яврăмăр.

Ситес вĕренӳ çулĕнче шкула çĕнĕрен 259 ача илмелле пулать, 23 класра пĕтĕмпе 690 ача вĕренме тытăнать. Ялти общественность тивĕçĕ—ачасене вĕренме лайăх условисем туса парасси. Çакна пирĕн депутатсем яланах асра тытаççĕ.

Çак кунсенче пулса иртнĕ сесси шкула çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен сӳтсе яврĕ.

Сессире шкул директорĕ ял Совет депутачĕ Семенов юлташ ытти депутатсене шкул вĕренӳ çулне мĕнле вĕçленипе, экзаменсем мĕнле пынипе паллаштарчĕ, вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче тухса тăнă йывăрлăхсемпе ситменлĕхсене палăртрĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, шкулта чылай ĕçсем туса ирттермелле: шкул çуртне тĕпрен юсаса çĕнетмелле, çуртра 3 кăмака пăсса юсамалла, икĕ тамбур туса алăкĕсене юсаса çĕнетмелле. Унсăр пуçне шкул тавра çĕнĕрен карта тытса çавăрмалла, виçĕ юпаллă хапха тумалла.

Халĕ шкул çуртне юсама тытăннă, 300 кубометр вутă илсе хатĕрленĕ. Шкул çулне ситнĕ ачасене тата шкул тулашĕнче тăрса юлнă ачасене пĕтĕмпех шута илнĕ. Ку ĕçе учительсене явăстарнă. Вĕренӳ пособийĕсем туянма тытăннă. Паянхи кун тĕлне физикăпа химикабинечĕсем валли 400 тенкĕлĕх тĕрлĕ приборсем туяннă.

Хĕллехи кĕске кунсенче сутă çукки шкул ĕçĕнче чăрмав кӳрет. Кăçал ку йывăрлăхран тухма—шкул çуртне электричество сутти кĕртме палăртрăмăр. Кăçал аякри ялсенчен килекен ачасем валли интернат пулать.

Вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçре тĕрлĕ вăхăтсем сиксе тухать. Вĕсене сирсе яма час-часах ертсе пыракан работниксемех чăрмантараççĕ. Çапла, сăмахран, шкулти вак-тĕвек юсав ĕçĕсене тума Ленин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ çынсем уйăрса памасть. Районти финанс пайĕ те ĕçе тытса тăрать. Шкулăн пĕр çуртне юсама 29 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Вăл паянхи финанс пайĕ пĕр пус та шкул шучĕ çине куçарса паман-ха.

Я. МОЗЯКОВ,
Хутар ял Совечĕн председателĕ.

Сутĕç органĕсен ответлă ĕçĕ

Республикăри шкулсенче экзаменсем вĕçленсе пыраççĕ. Вĕсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче совет учителĕсем çĕнĕ ӳсĕмсем тунине кăтартрĕç. Ситес çывăх кунсенчех шкулсенче педагогика совечĕн итоглă ларăвĕсем пулса иртеççĕ. Çав ларусенче учительсен коллективĕсем хăйсен сумталăхĕсем мĕнле ĕçленине тепĕр хут пăхса тухаççĕ, çавăн пекех 1953—54 вĕренӳ çулĕ валли ĕç планĕ палăртаççĕ.

Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ ăнăçлă пуласси шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнинчен килет. Çакна учительсем те, шкул руководителĕсем те лайăх пĕлеççĕ. Районсемпе хуласенче, ялсемпе поселоксенче шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хăвăрт хатĕрлес тĕлĕшпе социализмла ăмăрту саралса пырать. Çак кунсенче Çĕрпӳре шкул директорĕсемпе заведующийĕсен, ял Совечĕсен, колхоз председателĕсен, предприятисен тата суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе социализмла обязательство йышăннă. Çак обязательствăра шкулсемпе учительсен хваттерĕсене вăхăтра юсасси, вĕренӳре кирлĕ пособисем сителлĕ туянасси, шкулсенче спорт площадкисем тăвасси, вĕренӳ кабинечĕсемпе пионер пӳлĕмĕсем валли оборудовани туянасси синчен каланă. Халĕ çĕрпӳсем хăйсен обязательствине пурнăçлама тытăнчĕç.

Чылай çĕрте район, ял Совечĕсен сессийĕсем пулса иртеççĕ, унта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси çинчен сӳтсе яваççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкул ачисене пурне те сичĕ çул вĕрентмелле тăвас тата вунă çул вĕрентессине ытларах сарас ĕç уйрăмах пысăк вырăн йышăнмалла. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче хăшпĕр шкулсенче пурне те сичĕ çул вĕрентмелли йĕркене пурнăçламан. Çакă вăл шкул çулне ситнĕ ачасене шута илмен пирки тата халăх хушшинче ĕçĕ сителлĕксĕр туса пынă пирки пулнă. Муркаш районĕнчи чылай шкулсен руководителĕсем, ял Советсен председателĕсем çак ситменлĕхе пĕтерме халех тытăннă. Районти сутĕç пайĕпе шкулсен руководителĕсем вĕренме тивĕçлĕ ачасене пурне те шута илес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кăçал районта сичĕ çул тултарнă тата шкул çулĕсенчи ачасене виçĕ пине яхăн çынна вĕрентĕве хутшăнтармалла.

Пĕррмĕш—сиччĕмĕш классенче вĕренме тивĕç ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе каласусем ирттереççĕ. Учительсемпе класс руководителĕсем ачасен килĕсене çӳреççĕ.

Çав вăхăтрах республикăри районсемпе хуласенчи чылай шкулсенче вĕренĕве хутшăнтармалли ачасен списокне хатĕрлесси япăх пулса пырать. Хăшпĕр çĕрте вырăнти Советсем енчен çирĕп контроль çукки пула пурне те вĕрентмелли закона пурнăçлассине сителлĕксĕр йĕркеленĕ.

Иртнĕ çулсенче пулнă ситменлĕхсене пĕтерес тесен, шкулсемпе вырăнти Советсен руководителĕсен шкул çулне ситнĕ ачасене тĕрĕс шута илме, шкулсемпе классене ачасене тĕрĕс вырнаçтарма тăрăшмалла. Ачасене вĕренĕве хутшăнтарасси çинчен ĕçсыннисем хушшинче массăлла ĕçе анлă сармалла. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пур ачасем те шкула пыма пултарччăр. Çакăншăн шкулсен кăна мар, кашни çемьен, ял Совечĕн тăрăшмалла.

Иртнĕ çулта республикăри хăшпĕр шкулсенче ачасене вĕрентме условисем сителлĕклĕ пулман. Сăмахран, Красноармейски районĕнчи хăшпĕр шкулсенче вутшанкă ситменнипе классене тăтăшах хутса ăшăтман, çавăн пирки ачасем занятисене йĕркеллĕ çӳремен. Шкул работникĕсем ответлăха туйманнипе пула, хăшпĕр шкулсене юсаса ситермен пулнă.

Уйрăм Советсем ялти учительсене сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вут-шанкă хатĕрлесе памалли синчен правительство кăтартăвĕсене пурнăçламаççĕ, вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелеме условисем туса пама тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр районсенче учительсем валли хваттер тумалли плана пурнăçламаççĕ.

Çакă вăл сутĕç пайĕсем тата вырăнти хăшпĕр Советсем шкулсен, учительсен ĕçĕ çине тимсĕр пăхнине кăтартать. Çав ситменлĕхе текех тӳсме çук. Сутĕç пайĕсемпе шкулсен руководителĕсен, вырăнти Советсен шкулсене тата учительсен хваттерĕсене юсас, шкулсем, учительсем тата интернатсем валли вут-шанкă хатĕрлес тĕлĕшпе çаврăнăçуллăрах ĕçлес пулать.

Пирĕн Тăван çĕршывра шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçе пĕтĕм общественность хутшăнать. Иртнĕ çулта Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка районĕсенче общественность пулăшнипе нумай шкулсене юсанă тата çĕнĕрен тунă. Сутĕç пайĕсемпе педагогика коллективĕсен пуçарулăхĕпе организаторла ĕçĕнчен кăçал та шкулсене пулăшасси нумай килет. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме общественноса хутшăнтарас тĕллевпе нумай çĕрте шкулсем хăйсен ĕçĕ çинчен халăха отчет туса параççĕ. Шкул руководителĕсем ял çыннисен пухăвĕсенче, вырăнти Советсен сессийĕсенче, рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче хăйсен ĕçĕсем çинчен, ĕçри ситменлĕхсем çинчен калаçа параççĕ. Шкул руководителĕсем халăх умĕнче отчетсем туса пани шкулсен ĕçĕпе общественноса тĕплĕн паллаштарма, вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе тăракан задачăсене уççăн палăртма пулăшать.

Шкулсен отчечĕсене сӳтсе явма пухусене тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. Çак пухусене хатĕрлесе ирттерме район тата ял Совечĕсен депутачĕсене, общественлла организацисене анлă хутшăнтарас пулать. Лайăх хатĕрлесе ирттернĕ пуху, паллах ĕнтĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленме, вĕрентӳпе воспитани ĕçне чылай лайăхлатма пулăшать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне ăнăçлă хатĕрленесси, строительствăпа юсав тата ытти ĕçсене вăхăтра туса ирттересси укçа-тенкĕ сителлĕ уйăрса панинчен те нумай килет. Анчах çакна каламалла: Октябрьски, Етĕрне, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсенче шкулсем валли укçа-тенкĕ сителлĕксĕр парса тăнине пула кунта вĕренӳ çулне хатĕрленесси тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Шкулсемпе интернатсем тата учительсем валли вут-шанкă кӳрсе килме тăрăшмаççĕ, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем туянасси те япăх пулса пырать. Чăваш АССР Финанс министерствипе унăн вырăнти органĕсен бюджетăн пур статьисем тăрăх та укçа-тенкĕ вăхăтра уйăрса пама тăрăшмалла.

Вĕренӳ çулне йĕркеллĕ пуçлас тесен, шкулсенче кĕнекесем, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем, методика пособийĕсем сителлĕклĕ пулмалла. План тăрăх 22 тĕслĕ кĕнеке кăларма палăртнă пулсан, паянхи куна 14 кĕнеке çеç тухнă. Уйрăмах вĕрентӳпе методика литературин кăларасси япăх пулса пырать. Учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институт методикăлла кăтартусем пичетлесе кăларма вăхăтра хатĕрленмен. Методика пособийĕсен хăшпĕр авторĕсем алçырăвĕсене палăртнă срок тĕлне тăратмаççĕ.

Сутĕç министерствипе Чăвашгизăн вĕренӳ çулĕ пуçланиччен пур кĕнекесемпе вĕрентӳ программисене, çавăн пекех вĕрентӳпе методика литературине пичетлесе кăларассишĕн сине тăрса ĕçлес пулать.

Пичетлесе кăларнă кĕнекесене вăхăтра кӳрсе килес пулать. Иртнĕ çулта кĕнеке сутассине япăх йĕркеленине пула тата сутĕç пайĕсенче ĕçлекен хăшпĕр работникĕсен тимсĕрлĕхĕпе çаврăнăçусăрлăхне пула нумай шкул ачисен кĕнекесем пулман. Çав вăхăтрах республикăри хăшпĕр районсенче кĕнекесем складсенче чылай выртнă.

Вĕрентӳ пахалăхне лайăхлатасси учительсен педагогика тĕлĕшĕнчи квалификацине, идейăпа политикăлла шайне ӳстернинчен нумай килет. Учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институт кăçал çуллахи каникулсем вăхăтĕнче икĕ пин ытла учителе курссенче вĕрентсе кăларма палăртнă. Августăн 25-мĕшĕччен курссенче пуçламăш шкулсенче ĕçлекен, физика, математика, вырăс тата чăваш чĕлхисене, ют çĕршыв чĕлхине, СССР Конституцине, географи, химии, биологи вĕрентекен учительсене вĕрентсе кăлармалла.

Çак курссем пуçланчĕç. Умра пысăк ĕç тăрать. Çапах та Вăрнар, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне тата ытти районсенчи сутĕç пайĕсем курссенче вĕренме учительсене ярас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Сутĕç пайĕсемпе шкул руководителĕсен курссене учительсем ямалли плана тултарассишĕн тăрăшмалла. Учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн çак курссене идейăпа теори тата методика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра ирттерессишĕн тăрăшас пулать.

Сутĕç пайĕсен халĕ, вăраха ямасăрах, учительсен августри канашлăвне, районсемпе хуласенче педагогика ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттерме хатĕрленмелле. Районти педагогика кабинетĕнче шкулсен пахa опытне кăтартакан выставкăсем пулмалла.

Çавăн пекех сутĕç пайĕсен, профсоюз тата комсомол организацийĕсемпе пĕрле, учительсен çуллахи канăвне йĕркелес пулать. Учителе культура центрĕсенче, экскурсисенче, театрсенче пулма лайăх условисем туса памалла.

Шкул ачисен çуллахи канăвне ирттермелли центр пулма тивĕç. Çавна Чкаловски районĕнчи Анат Туçари вăтам шкулти учительсем лайăх ăнланнă. Шкулти педагогика коллективĕ шкул тата класс тулашĕнчи ĕçе тĕплĕн тĕпчесе вĕреннĕ. Çапла майпа çуллахи вăхăтра ачасемпе походсем, экскурсисем, тематикăлла вечерсем тата утренниксем ирттерме палăртнă.

Шкул руководителĕсемпе учительсем умĕнче тăракан тепĕр задача вăл—кĕркунне экзаменсем тытма хăварнă ачасемпе ĕçлесси. Çак ачасене тивĕçлĕ пулăшу памалла. Кĕркуннехи экзаменсем умĕн занятисене вăхăтра ирттерни ачасен пĕлĕвне ӳстерме, çапла вара вĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче аслăрах класра вĕренме май парĕ.

Пирĕн çĕршывра шкулăн, ачасене воспитани парассишĕн тăрăшасси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви, пĕтĕм общественность куллен пулăшнипе сутĕç органĕсем, пирĕн учительсем 1953—54 çулсенчи çĕнĕ вĕренӳ çулне ăнăçлă хатĕрленесе ситĕç, çамрăк ăрăва коммунизм обществин активлă строителĕсем пулма воспитани парас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç.

А. ТОКАРЕВ,
Чăваш АССР Сутĕç министрĕ.

ТĔНЧЕРИ ЛАРУ-ТĂРУ

КАЛАÇУСЕМ ИРТТЕРНИПЕ МИР ТАВАССИШĔН

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн июнĕн 15-мĕшĕнче Будапештра уçăлнă сессийĕн ĕçĕсене тĕнчери халăхсем тимлĕн асăрхаса тăраççĕ. Сесси кун йĕркинче: «Калаçусем ирттересси тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси» çинчен тăракан ыйту çине пăхнипе çав тапхăрти самана тĕрлĕ çĕр пăхма пултаракан сыв тупма та тĕрĕс терех.

Ĕтемлĕхĕн пысăк пайĕ тĕнчери лару-тăрăва пăсса тăракан мĕнпур тавлашулă ыйтусене мирлĕ майпа татса памалла тăвассишĕн, «сивĕ вăрçа» чарса, хĕçпăшалланăва чакарасшăн, халăхсем хушшинче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ çыхăнусем туса хурассишĕн тăрăшать.

Анчах хăшпĕр çĕршывсенче мир туса хурассисенче, çапла вара хĕçпăшал ытлашши туса кăларнипе илекен тупăшсене çухататассисенчен хăракан çынсем те пур. Уя пек çынсем нумай мар пулсан та вĕсен влияни пама пултараççĕ. Халăхсем Будапешт çине Пĕтĕм тĕнчери вĕренсен ... Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн ĕçĕсем çине сехĕрленсе, тулхăрса пăхаççĕ. Вĕсем те миршĕн тăракан юхăмĕн вăйне хаклама вĕренсе çитрĕç ĕнтĕ. Çак юхăмĕн вăйĕ çинчен юлашки вăхăтра тĕнчери лару-тăрура пулса иртнĕ пысăк улшăнусем лайăх каласа параççĕ.

Совет правительстви мирлĕ улшăнусене тата вăл мĕнпур тавлашулă ыйтусене тĕрĕс калаçусем ирттерме хатĕр тăни çинчен пĕлтерни Пĕтĕм тĕнчери ырă шухăшлă çынсем хапăл туса йышăнчĕç. Анчах Совет правительстви калаçусем ирттерес тĕлĕшпе малтанах йышăнтарасшăн условисем хирĕç... Мĕнпур çĕршывсенчи ĕç çыннисем Совет Союзĕн мирлĕ пуçарăвне йышăнма, калаçусем ирттерме мир тума хуш ыйтасçĕ. Францири предприятисенче, департаментсенче, хуласемпе ялсенче «Калаçусем ирттерессишĕн, миршĕн» кĕрешес палăрпа июнĕн 27-мĕшĕнче Парижра пухмă палăртнă конференцие хатĕрленессипе вăйланса пырать. Çак кунсенче Австрире «Мир эрни» вĕçленчĕ. Вăл тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас палăрпа пулса иртнĕ. Италире те «Мир эрни» пырать. Англири профсоюзсен çуллен пулса иртекен конференцийĕсем йышăннă резолюцийĕсем мĕнпур тавлашулă ыйтусене калаçусем ирттернипе татса пама кирли çинчен, тĕнчери пысăк ыйтусене татса панă чухне вăл политикине усă курма пăхнине пăрахăçа кăларма кирли çинчен каланă.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ хăй умне кăларса тăратнă ... задачă мĕнпур общественнăй вăйсене миршĕн пĕрлештерсе кĕрешме пĕтĕçтерессине тата организацилессине пулать. Сессире туха калакан делегатсен сăмахĕнче пĕр шухăш яр-уççăн палăрса тăрать: калаçусем ирттерме кирлипе тата ирттерме май пурри ăнланса илнĕ мĕнпур çынсене миршĕн кĕрешес ĕçе хутшăнтармалла. Çав вăхăтра тĕрлĕ çĕршывсенчи халăхи вăхăтра миршĕн тăракансен юхăмĕпе пĕрле пымаш, анчах вăрçă вăйĕсене хирĕç тăракан общественнăй ушкăнсем те ку ĕçре пулăшса пымалла.

Мир патне пымалли çул çинче тунă малтанхи çитĕнÿсем вихăм енчен те кĕрешÿ вăйсăрлатма юрани çинчен каласççĕ. Тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе хăварас тесен, хамăр кĕрешĕве тата темпсе хут вăйлатмалла.

«Эпир хамăран задачăсене чылай енчен пурнăçласа çитерейĕмен-ха,—тенĕ сессире Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн генеральнăй секретарĕ Жан Лаффит,—пирĕн çĕнтерÿ чылай енчен тулли мар-ха». Пурте пĕлеççĕ, вăрçăшăн тăракансем — «сивĕ» вăрçă майлисем те, «вĕри» вăрçă майлисем те—тĕнчери лару-тăрăва халь хин пекех хăварассишĕн кĕрешме чарăнмаççĕ. Çакăн çинчен Çурçĕр Атлантика союзĕн организацийĕсем нумаях пулмасть хĕçпăшалланассине малашне те вăйлатма кирли çинчен йышăннă решенисем; Хĕвеланăç Германири пуç пулса тăракан ушкăнсен представителĕсем тăватă держава канашлăвне пухассине хирĕç пулни; Корейăра перемири тăвассине путлантарса лартас тĕллевпе Ли Сын Ман ушкăнĕ провокациллĕ ĕçсем туса ирттерни; Америкăри политикăлла деятельсен агрессиллĕ сăмахĕсем тата ыттисем те каласçĕ. Хальхи хирĕçÿсене йĕркелесе ярассине вăрттăн хирĕç тăракансем те пур. Вĕсем сăмахпа «миршĕн» тăраççĕ, ĕçре вара мир тăвассине пур майсемпе те хирĕç пыраççĕ. Вĕсем çинчен сессире пастор Мартин Нимеллер (Хĕвеланăç Германи) питĕ лайăх каланă: «Эпĕ «мир» тесе калатăп пулсан, çав вăхăтрах тепĕр енĕпе тĕл пуласа калаçса татăлма шутламастăн пулсан, ку вара, чăннипе, ăна миршĕн тăрăшмасăр пулать, «мир» сăмаха тăрăнсăр усă курни, шанчăк паракан сăмахсем сынсене улталани пулать».

Сесси делегачĕсем Германи ыйтăвне татса парас, Корейăри, Индо-Китайри, Малайăри вăрçа чарса лартас, ООН-а тĕреклетес, халăхсем хушшинчи суту-илÿпе культура çыхăнăвĕсене вăйлатас, мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан ытти ыйтусене татса парас тĕлĕшпе те конкретлă сĕнÿсем параççĕ. Çĕршывсен хушшинче йĕркеллĕ çыхăнусем туса хума май паракан кирек мĕнле ĕçе те, кирек мĕнле утăма та, кирек мĕнле калаçăва та йышăнас пулать. Çакăн пек ĕнтĕ халăхсем суйласа янипе Будапешта пухăннă Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕн сассипе туха калакан сăмахсем тĕп шухăшĕ.

Инди делегацийĕ мĕнпур делегатсен тата пĕтĕм тĕнчери çĕршер миллион çынсен шухăшĕсемпе килĕшсе сессире пăхса тухма тăратнă сĕнÿре çакна палăртса пачĕ: «Будапештри тухаçан чĕнÿ сăмахĕсем çакăн пек пулччăр: Пирĕн хирĕçÿсем çуратса кăларакан пур ыйтусем тăрăх та калаçу ирттерĕпĕр!»

АНГЛИ ТАТА ЛĂПКĂ ОКЕАН ПАКЧĔ

Июнĕн 17-мĕшĕнче Англире общинăсен палатинче калле Англипе Америка хушшинчи ыйтусенчен пĕрне—Англин Лăпкă океанри доминионĕсемпе—Австралипе тата Çĕнĕ Зеландипе США тăвакан çар союзне—«Анзуса» кĕме Англие ирĕк паманни çинчен тăракан ыйтăва хускатнă.

Депутатсене ответ парса, премьер-министр Черчилль ниçтан пытарса тăмасăр: «Мана «Анзус» пакчĕ пачах килĕшмест. Анчах çак ыйтупа эпир кăтартусем пама пултараймастпăр. Пирĕн хамăр вырăнне пур кура тăрăшас пулать, анчах ĕлĕк мĕн кăтартассине кĕтсе тăрас пулать», тенĕ.

Анчах ку тараччен вăхăт та, Британи правительстви дипломати енĕпе темĕн пек тăрăшни те Вашингтона ниçтан влияни те пама пултараймарĕ, «Анзус» алăкĕсем çавăн пекех Англиешĕн хупă тăраççĕ. Англи халăхĕ правительствăн ăнĕкхи лейбористсен те, унтан вара хальхи правительствăн хăй те «Лăпкă океанри кĕçĕн союза» тулли член вырăнне пулмасан, асăрхаса тăракан çын вырăнне те пулин Англие кĕртмелле тăвас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшса пăхнă.

Иртнĕ çулхи кĕркунне Британи империне кĕрекен çĕршывсен премьер-министрĕсен конференцийĕнче Англи правительстви Австралипе Çĕнĕ Зеландийĕн Шурă çурт умĕнче Англи хутне кĕме ытла пăхнă. Анчах çакăнтан нимĕн те тухман. Кăçалхи январь уйăхĕнче Англи премьер-министрĕ çав пирки президент Эйзенхауэр умне ыйту тăратнă. Анчах та, Австралипе пулса тăракан «Дейли миррор» хаçат çырнă тăрăх, «çĕнĕ президент çавна халĕ кана та чикмен». Англи правительстви Британи империне кĕрекен çĕршывсен премьер-министрĕсен нумаях пулмасть пулса иртнĕ конференцийĕнче тепĕр хут телей тупма хăтланса пăхнă. Июнĕн 10-мĕшĕнче Англипе унăн Лăпкă океанри икĕ доминионĕ хушшинче «Лăпкă океанри Кăнтăр-Хĕвелтухăç Ази хÿтĕлемелли» ыйтусем тăрăх калаçусем пуçланнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак калаçусенче тунă «пысăк çитĕнÿ» вăл—«Англи тата Австралипе Çĕнĕ Зеланди Англипе Лăпкă океан пактне хутшăнма ирĕк паман пирки пĕр-пĕрне лайăх ăнланса илни пулать».

Анчах тепĕлĕнрех пăхсан, çак «çитĕнÿ» ытла та витĕмсĕрри курăнать. Австрали премьер-министрĕ Мензис тата Çĕнĕ Зеланди премьер-министрĕ Холланд хăйсен «самăшĕ—Англи» валли нимĕн те тума килĕшмен. «Анзуса» улăштарма çук, — тенĕ вĕсем. — Америка Англипе мар, Австралипе тата Çĕнĕ Зеландипе кăна пакт тăвасшăн».

Пĕтĕмĕшле дискусси ирттернĕ хыççăн пĕртен-пĕр çакăн пек решени кăна йышăнма пултарнă: Англи «Анзуса» кĕрессе çинчен тăракан ыйту «Лондонпа Вашингтон хушшинче калаçусем ирттернипе татса памалли ĕç пулмалла».

Çапла ĕнтĕ, лав вырăнтан тапранман. США Лăпкă океан блокне Англие кĕртессине пĕтĕм вăйран хирĕç тăни тата США Британи доминионĕсене политика, экономика тата çар тĕлĕшпе хăйĕн контролĕнче тытса тăрасси вăйланса пыни—Англипе Америка хушшинчи хирĕçÿсем тарăнланса пынине кăтартаççĕ.

«ШУМАН ПЛАНĔ» ĔÇРЕ

Июнĕн 13-мĕшĕнче Францин Нор тата Па-де-Кале департаменчĕсенче, çĕр кăмрăк бассейнĕсен администрацийĕ хушнипе, çĕр кăмрăк шахтисенче пур çĕрте те пĕр кунлăха пĕтĕм ĕçе чарса лартнă. 147 пин шахтер ĕçсĕр ларнă. Июнĕн 15-мĕшĕнче Мозель департаменчĕн шахтисене те чарăнса ларнă.

Çавăн пек ирĕксĕрлесе «забастовка» тухарасси ĕнерен килнĕ-ха? Официаллă йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, çĕр кăмрăкĕ ытлашши нумай кăларнă тата сутмасăр выртакан запас пысăк. Анчах ытлашши çакăн пек кăларса пани тепĕр ыйту кăларса тăратать: çĕр кăмрăкĕ çакăн пек ытлашши пулсан, мĕншĕн Франци правительстви çĕр кăмрăкне ют çĕршывсенчен питĕ нумай кÿрсе килет? Иртнĕ çул США-па Хĕвеланăç Германирен 14 миллион тонна яхăн çĕр кăмрăкĕ туртарса килнĕ. Тата çак та тĕлĕнтерет: Францире кăларнă пĕр тонна çĕр кăмрăкĕ 4.995 франк тăрать, ют çĕршывсенчен кÿрсе килнĕ çĕр кăмрăкĕн тонни пуçне 8.547 франк тÿленĕ!

Ĕçсем çакăн пек килсе тухни Франци «Шуман планĕ» тăрăх туса хунă «Европăри çĕр кăмрăкпе хурçă пĕрлешĕвне» кĕнĕ пирки пулса тăнă. Çак плана Францире пурнăçа тесçĕ пулсан та, ăна чăннипе США-ра туса хатĕрленĕ. Çак плана кăларасси шучĕпе Европăри çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвĕ агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокĕн экономикăллă никĕсĕ пулса тăмалла. «Европăри оборона пĕрлешĕвĕнче» çĕнĕрен чĕрĕлсе тăракан Хĕвеланăç Германи çарĕ тĕп вырăн йышăнса тăмалла пулсан, çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвĕнче те Хĕвеланăç Германи монополийĕсем — çар промышленносĕн Рур магначĕсен малти вырăна йышăнмалла. Вĕсен çурăмĕ хыçĕнче Америка банкирĕсем тăраççĕ.

«Çак тĕлĕнмелле чăпăк çĕнĕве — Европăри çĕр кăмрăкпе хурçă пĕрлешĕвĕ туса хунине мĕн чухлĕ ытларах тĕпчесе пăхатăн, çавăн чухлĕ ытларах çавна ăнланса çитетĕн: ку вăл, Франци промышленникĕсем енчен пăхсан, тĕпсĕр ыршăна сикни пулать», тесе çырнă Англире тухса тăракан «Спектейтер» журнал.

Çавăн çумне хушса, йăнăш пулăраччĕ хăрамасăр, çапла калама пулать: Францишĕн, тата та ытларах «Шуман планĕ» çумне хутшăннă ытти вăйсăртарах çĕршывсемшĕн, çăмăхран, Итали, Бельги, Люксембург, Голланди пек çĕршывсемшĕн çак «картельсен картельне» кĕни, нимĕн те мар, тĕпсĕр ыршăна сикни кăна пулать.

Хĕвеланăç Германи çĕр кăмрăкне кăларас тата хурçă шăратас тĕлĕшпе çав «тантăшĕсенчен» иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Вăл вĕсен позицийĕсене экспорт тĕлĕшĕнчен кăна мар, тата хăйсен çĕршывĕсенчи рынокĕ тĕлĕшĕнчен те хавшатса пырать. Уйрăмах Хĕвеланăç Германипе Франци монополийĕсем хушшинче хаяр конкуренци пырать. Çакна пула Франци çĕр кăмрăк промышленносĕ вăйсăрлансăмĕн вăйсăрланать.

Кăçалхи çулăн малтанхи кварталĕнче Франци çĕр кăмрăкĕ, 1952 çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, 100 пин тонна яхăн сахалтарах кăларнă. Çак вăхăтрах çĕршыва çĕр кăмрăкĕ туртарса килесси ÿснĕ. Вăрçă хыççăн Франци промышленникĕсем вăрçăччен 54 миллион тонна çĕр кăмрăкĕ кăларни вырăнне 1955 çулта 70 миллион тонна кăларма шутласа план хатĕрленĕ. Халĕ вĕсем çĕр кăмрăкĕ кăларассине ÿстерме мар... чакарма плансем хатĕрлеççĕ. 1956 çулта 36 шахта хупса лартма палăртнă. Тимĕр-тăмăр предприятийĕсем тĕлĕшпе те çакнашкал плансем туса хатĕрлеççĕ. «Тупăшлă мар» тесе нуншар тимĕр-тăмăр предприятийĕсене хупса лартаççĕ. Тимĕр-тăмăр промышленносне «рационализацилемелли» программа тăрăх 100 пин ытла рабочи ĕçсĕр тăрса юлма пултарать. Юлашки пилĕк çул хушшинче Францире унсăрăн та шахтерсен хисепĕ виççĕмĕш пайĕ чухлĕ чакнă.

Тимĕр-тăмăр предприятийĕсем çавăн пекех Италире те хупăнаççĕ. Бельги, Люксембург, Голланди пек çĕршывсене илес пулсан, вĕсен тимĕр-тăмăрпа çĕр кăмрăк промышленносĕ «тупăшлă мар» пирки, пуринчен малтан арканма пултарать. Çак çĕршывсенчи ĕççыннисене ĕçсĕрлĕх хăратса тăрать.

«Шуман планĕ» текенскерне пурнăçлама тытăннă малтанхи уйăхсем хыççăнхи намăсла ĕçĕн итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ. Вăл план халăхсен экономикине пысăк сиен кÿрет.

М. МАРКОВ.

Франциri Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ

Морис Торез тухса калани

ПАРИЖ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Франци Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Пленумăн юлашки ларăвĕнче Франци Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез кĕске сăмах тухса каланă.

Франци халăхĕ Франци политикине тĕпрен улăштарма тăрăшнине палăртса, Торез çапла каланă:

Рабочисем çавна килĕнаççĕ, çакăн пек тĕпрен улшăну тума пĕрлĕхлĕ пулса ĕçленисĕр пуçне урăхла майсем çук.

Торез Халăх фрончĕн опычĕпе урокĕсем çинчен аса илтернĕ, Франци буржуазийĕ тата сылтăм социалистсен лидерĕсем хальхи вăхăтра пĕрлĕх туса хурассинчен хăранине палăртнă. Çав пĕрлĕх вăл анлă юхăма пуçламăш кăна пулать. Ку юхăм Францире хăшпĕр йĕркене улăштарма май парать.

Юлашкинчен Торез коммунистсене халăх çулĕ çинче тĕл пулакан мĕнпур чăрмавсене çĕнтерсе пыма чĕнсе каланă.

Пленум йышăннă резолюцире çакна палăртнă: Совет Союзĕн тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе тунă пуçарăвĕсем тĕнчери ĕçсемпе общество шухăшне пысăк влияни параççĕ.

«Франци халăхĕ ниçтан пирчен те ытла çакна палăртать:

Совет Союзĕн тулашри политики пĕтĕмпех мире сыхласа тăрас тата мир туса хурас, халăхсем пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлемелле тăвас, мĕнпур çĕршывсем хушшинче ĕçлехлĕ çыхăнусем туса хурас ĕçе пăхăнса тăрать.

Франци халăхĕ Совет государствин руководителĕсен заявленийĕсене ырлать. Вĕсен пĕтĕм ĕçĕ çакна кăтартса парать: хальхи вăхăтра мирлĕ майпа йĕркелесе яма май килмен пĕр тавлашулă ыйту та çук».

Резолюцире çакна палăртнă: миршĕн кĕрешес юхăм вăйсăрланмалла мар, Франци Коммунистсен партийĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне июнĕн 27-мĕшĕнче тата 28-мĕшĕнче калаçусемшĕн тата миршĕн ирттерме палăртнă конференцие хатĕрленес ĕçе памалла.

Сывлăхри тĕллев, тенĕ малалла резолюцире, Вьетнам, Лаос, Камбоджи халăхĕсене хирĕç вăрçă вăрçассине чарса лартасси, Германи ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелесе ярасси, Хĕвеланăç Германире милитаризма тепĕр хут вăйланма май паракан Бонра тата Парижра çырса хатĕрленĕ çар договорĕсене сирсе ярасси пулать.

Малалла пленум хăйĕн решенийĕнче юлашки 6 çул хушшинче Францире пуç пулса тăракан ушкăнсен политикине тишкерсе тухнă, çав политика «халăха хирĕç, рабочи класа хирĕç» пыракан политика пулать, тесе палăртнă.

Резолюцире çавăн пекех хальхи вăхăтра рабочи класăн пĕрлĕхне аслăлатма лайăх май килсе тухнине палăртнă.

Пленум Коммунистсен партийĕн мĕнпур ячейкисемпе секцийĕсене пĕрлĕхшĕн кĕрешессине пур майсемпе те вăйлатса пыма чĕнсе каланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян пĕлтернисене çапла каланă:

Иртнĕ кун хушшинче Пенамдонран 4 километр хĕвелтухăçнерех, Юртон ялĕ районĕнче, тăшмана пĕр батальонĕ 7 хутчен атака туса хăтланса пăхнă. Тăшмана чылай пысăк сиен кÿрсе каялла туса янă.

Америка авиацийĕ мирлĕ халăх пурăнакан районсем çине çаплах тапăнать. Ĕнер Америка самолечĕсем Тхячон тата Кусен водохранилищисем çине тапăннă. Пысăк сиен кÿнĕ. Паян вĕсем Чунхва уездĕнчи Кудейли тата Сенчонли ялĕсем çине тискеррĕн тапăннă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсемпе самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 6 самолетне персе ÿкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

Синьхуа агентстви Ли Сын Ман провокацийĕ çинчен

ПЕКИН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Июнĕн 18-мĕшĕнче, çурçĕртен пуçласа ирччен, американецсен ирĕк панипе, пĕр вăхăтрах Нонсанри, Масанри, Пусанри тата Саннудайри çар лагерĕсенчен Корея халăх çарĕн тÿррех репатриаци туманнисен шутне кĕртнĕ тыткăнри 25 пин çар çыннине «ирĕке кăларнă».

Тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен 10 кун каярах тунă килĕшÿ тăрăх, çак тыткăнри çар çыннисене перемири тунă хыççăн икĕ уйăх хушшинче нейтраллă государствăсен представителĕсенчен репатриаци тĕлĕшĕн ĕçлеме уйăракан комисси аллине памалла. Тыткăнри çар çыннисене лисынмановецсем çавăн пек «ирĕке кăларни» вăл, тĕрĕссипе, Ли Сын Ман çарне мобилизацилес тĕллевпе тыткăнри çар çыннисене лагерьсенчен илсе тухнине пĕлтерет.

Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ июнĕн 18-мĕшĕнче Пусанран пĕлтернинче «Кăнтăр Корейăри аслă çар влаçĕсем» каласа панине илсе кăтартнă. Унта: «ирĕке кăларнă тыткăнри 25.000 çар çыннисенчен ытларахăш пайне Кăнтăр Корея çарне илеççĕ», тесе каланă. Çакăн пек туни вăл лисынмановецсем тыткăнри çар çыннисене вăйпа хăйсен аллинче тытса юлас тĕллеве пурнăçлани пулнă пулĕччĕ.

Америка çарĕсен штабĕ Токиора ĕнер заявлени пичетлесе кăларнă. Унта каланă тăрăх, килĕшĕве çакăн пек сĕмсĕррĕн пăснăшăн пĕтĕмпех лисынмановецсем ответлă пулса тăраççĕ. Çак ĕçе туса ирттерме Ли Сын Ман правительствин аслă чиновникĕсем Кăнтăр Корейăри охранкăпа пĕрле малтанах хатĕрлесе хунă пулать.

Анчах нумай фактсем çак ĕçсемшĕн Америка çарĕсен штабĕ ответлă пулнине кăтартса параççĕ. Тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларма» панă приказ çинчен каласа, Ли Сын Ман çапла каланă: «Эпир çак тыткăнри çар çыннисене ирĕке кăларассишĕн пулни çинчен эпĕ каласса пăхнă Пĕрлешнĕ нацисен командованийĕн представителĕсем нумайăшĕ ку ĕç çине пирĕн майлă пăхаççĕ, пирĕнпе килĕшеççĕ».

Ли Сын Ман ушкăнĕ çак тыткăнри çар çыннисене тахçантанпах «ирĕке кăларма» хатĕрленет. Июнĕн 9-мĕшĕнче Кăнтăр Корейăри «наци пухăвĕ» «хăйсен тăван çĕршывне каялла таврăнма килĕшмен тыткăнри мĕнпур корецсене халех ирĕке кăларасси çинчен тата хăйсен тăван çĕршывне каялла таврăнма килĕшмен тыткăнри Китай çыннисене Тайвань утравĕ çине ярасси çинчен» решени йышăннă. Америка енĕн, паллах, çакăн çине тимлĕн пăхмалла пулнă. Кунсăр пуçне, Кăнтăр Корейăн çак 4 лагерьти йĕркелĕхшĕн ответлă пулса тăракан хуралĕ Америка офицерĕсен командованийĕн аллинче тăрать. Ли Сын Ман тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларма» хатĕрленни çинчен американецсем лайăх пĕлсе тăнă, апла пулсан та вĕсем çак ĕçе тума кансĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Кăнтăр Корея хуралне улăштарма Ли Сын Ман 25.000 тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларнă» хыççăн тин Америка çарĕсене янă.

Ли Сын Ман ушкăнĕн провокациллĕ ĕçĕсем пирки

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ООН генеральнăй секретарĕ Хаммаршельд Çурçĕр Корейăн тыткăнри çар çыннисене «ирĕке кăларни» «Пĕрлешнĕ нацисем йышăннă позицие уççăнах хирĕç пыракан» пысăк событи пулса тăрать, тенĕ.

Хаммаршельд çапла каланă: Ли Сын Ман правительстви çакăн пек «пĕр енлĕн туса ирттернĕ ĕç», «нумаях пулмасть туса ирттернĕ ĕçсем» пекех, Корейăна пĕрлештерсе ура çине тăратас тĕлĕшпе Пĕрлешнĕ нацисен ĕçне чылай йывăрлатрĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ Гонсалес пĕлтернĕ тăрăх, дипломатиллĕ обозревательсем çапла калаççĕ: Корейăра тыткăнри çар çыннисене тепĕр хут вĕлерсе пĕтерме тытăнни — Пĕрлешÿллĕ Штатсем енчен татăклă ĕçсем туса ирттерме хушать.

Корреспондент каланă тăрăх, лайăх пĕлсе тăракан çынсенчен пĕри: «мир тумасан, çакăн пек ĕçсемшĕн мĕнпур çĕршывсенче Пĕрлешÿллĕ Штатсене айăплама пуçлаççĕ», тенĕ.

Отто Нушкене тирĕке кăларнă

БЕРЛИН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕн Германири Верховнăй Комиссарĕ псоф В. С. Семенов, Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тата мирлĕ пурнăçа юратакан нимĕçсем хушнипе, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр заместительне, Германири христианла-демократла союз председательне Отто Нушкене паян Америка арестĕнчен хăтарнă, 11 сехет те 40 минутра ăна секторсем хушшинчи чикĕре Америкăн гражданла чиновникĕсем Христианла-демократла союзăн политикăллă комитечĕн представителĕсене панă.

Венгрипе Франци хушшинчи суту-илÿ килĕшĕвĕ

БУДАПЕШТ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Будапештра Венгрипе Франци хушшинче 1953 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1954 çулхи июнĕн 1-мĕшне çитиччĕнхи тапхăр валли тавар çаврăнăшĕ çинчен тата расчет çинчен килĕшÿ тунă. Франци Венгри Халăх Республикине йывăр промышленносăн çăмăл промышленность материалĕсем тата ытти таварсем тăратать. Венгри Халăх Республики Францие промышленносăн ялхуçалăх продукчĕсем сутать.

Албанири Демократиллĕ фронтăн Генеральнăй Совечĕн ларăвĕ

ТИРАНА, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Тирана хулинче Албанири Демократиллĕ фронтăн Генеральнăй Совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Демократиллĕ фронтăн ĕçĕсем çинчен тата унăн малашнехи задачисем çинчен сÿтсе явнă. Çак ыйту тăрăх Демократиллĕ фронтăн генеральнăй секретарĕ Хюсни Капо доклад тунă.

Албанири Демократиллĕ фронтăн Генеральнăй Совечĕ мĕнпур хресченсене, ялхуçалăх кооперативĕсен членĕсене, государство ялхуçалăхĕпе МТС работникĕсене тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлă ирттерме чĕнсе каланă.

СЛОВАКИРЕ НАУКА АКАДЕМИЙĔ ПУЛАТЬ

ПРАГА, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Словакири Наци Совечĕн ларăвĕнче Словакири Наука академине туса хурасси çинчен закон йышăннă.

Гастрольсем пуçланчĕç

Июнĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарта Молотов облаçĕнчи Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем пуçланчĕç. Малтанхи кун театр М. Горькин «Старик» пьесине лартса пачĕ. Спектакле Р. А. Сирота режиссер лартма хатĕрленĕ, декорацисене С. И. Казановский художник тунă.

Спектакль пуçланас умĕн Чăваш государство академи театрĕн главнăй режиссерĕ Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ К. И. Иванов юлташ Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн коллективне саламларĕ.

Гастроле килнĕ театр коллективĕ ячĕпе театрăн главнăй режиссерĕ Г. М. Сушкин юлташ сăмах каларĕ.

Малтанхи спектакль питĕ ăнăçлă иртрĕ. Курма пыракансем артистсем лайăх выляннине палăртрĕç.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ

„Поют жаворонки"

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.
(Кондрат Крапива комедийĕ).
Режиссерсем — В. Корш-Саблин, К. Санников.
Композитор — Г. Пукст.
Юрăсемпе ташăсен исполнителĕ— Белоруссири государство халăх хорĕ.
Фильма «Беларусьфильм» киностудийĕ ÿкернĕ, 1953 çул.

Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн
ГАСТРОЛĔСЕМ
Паян, июнĕн 21-мĕшĕнче, Чăваш академи театрĕн çуртĕнче,
кăнтăрла — «Королевство кривых зеркал»
каçхине — «Шакалы».
Июнĕн 22-мĕшĕпе 23-мĕшĕнче каçхи спектакльсем — «Сердце не камень».
Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО
«РОДИНА» — июнĕн 21-мĕшĕнче 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче—«Золушка». Ытти сеанссенче — «Пекарь императора». Сеансем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.
Июнĕн 22-мĕшĕпе 23-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче—«Она защищает Родину», ытти сеанссенче—илемлĕ çĕнĕ фильм «Белинский».

Индипе Болгари хушшинчи суту-илÿ килĕшĕвĕ

ДЕЛИ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари суту-илÿ миссийĕпе Инди правительствин представителĕсем калаçусем ирттернĕ хыççăн, Болгарипе Инди хушшинче 1954 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччĕнхи срока суту-илÿ килĕшĕвĕ тунă.

Болгари Индие мохотилкăсем, пневматически насусем, станоксем, прессем, электромоторсем, хими, керамика, кĕленче, йывăç, апат-çимĕç промышленносĕсем туса кăларакан продукци тата ытти таварсем тăратать.

Инди хăй енчен Болгарие хура пăрăç, чей, çăм, çĕр мамăкĕ, эмел тумалли япаласем, электрокабель, шеллак, тумтир, çăпан, бамбук тата ытти таварсем сутать.

Индипе Болгари хушшинче çакăн пек килĕшÿ пуçласа тунă.

Франциri правительство кризисĕ

ПАРИЖ, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Андрэ Мари правительство туса хума пултарайманнине кура, республика президенчĕ Венсан Ориоль паян ирхине хăйĕн резиденцине политикăлла деятельсене канашлăва пухнă. «Монд» хаçат çырнă тăрăх, канашлăва 1947 çултан пуçласа министрсен совечĕн председателĕсем пулса пăхнă мĕнпур çынсене, хальхи кризис вăхăтĕнче премьер-министр пулма уйăрнă, анчах наци пухăвĕнчен полномочи илме пултарайман мĕнпур çынсене, çавăн пекех парламентри мĕнпур ушкăнсен руководителĕсене пухнă. Çак канашлăва коммунистсене чĕнмен.

Венсан Ориоль канашлăва пухнă политикăлла деятельсене «парламентри ушкăнсемпе пĕрле килĕшсе халех туса ирттермелли ĕçсен программине туса хума» чĕнсе каланă. «Пĕрле килĕшсе хатĕрленĕ программăна туса хурсан,—тенĕ Ориоль,—эпĕ министрсен совечĕн председателĕ пулма кандидат уйăратăп, ăна, çитес эрне вĕçĕнче Франции правительство пултăр тесе, хăйне полномочи парас тĕлĕшпе наци пухăвĕнчен ыйтма хушатăп».

«Монд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, президент чĕнсе илнĕ деятельсем июнĕн 20-мĕшĕнче ирхине программа туса хатĕрлеме пухăнаççĕ. Июнĕн 21-мĕшĕнче çак программăна Ориоле параççĕ.

Çав вăхăтрах парламентри сылтăм ушкăнсем васкавлă йĕркепе конституцин чылай статьисене улăштарма хатĕрленеççĕ. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Наци пухăвĕн регламент тата пĕтĕмĕшле сÿйлав прави тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ паян конституцин çĕнĕ правительство туса хурасси çинчен калакан 45-мĕш статьине улăштарма йышăннă.

Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри хуласемпе ялсем çине çаплах тапăнать

ПХЕНЬЯН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ çаплах Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи мирлĕ хуласемпе ялсем çине хаяррăн тапăнать.

Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка самолечĕсем юлашки кунсенче Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи ялсем çине темиçе хутчен тапăннă. Июнĕн 12-мĕшĕнче Америка штурмовикĕсен пĕр ушкăнĕ Ковон уездĕнчи ялсем çине тапăннă: бомбăсем нумай пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Июнĕн 14-мĕшĕнче Америкăн 10 штурмовикĕ Канчжу уездĕнчи ялсем çине тапăннă, уйра ĕçлекен хресченсене пулеметсенчен пенĕ. Июнĕн 15-мĕшĕнче штурмовиксемпе бомбардировщиксем Доксан тата Синьхын уезчĕсем çине тапăннă.

Мирлĕ халăх хушшинче, вăл шутра ачапăчасем, стариксем, ачасем, хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-90, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01424. Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.